чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

73 /26479/№ Ытлари кун, 2014, ака (апрель), 22 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru


## Кун йĕркинче – ял аталанăвĕ

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕнер Мускавра Раççей Федерацийĕн Патшалăх Канашĕн тата РФ Президенчĕ çумĕнчи пысăк пĕлтерĕшлĕ наци проекчĕсене пурнăçлас тата демографи политики енĕпе ĕçлекен канашăн пĕрлехи ларăвне хутшăннă. Унта ял территорийĕсен çирĕп аталанăвне тивĕçтерес ыйтусене пăхса тухнă.

Владимир Путин Президент палăртнă тăрăх – ял территорийĕсен çут çанталăк, экономика, демографи тата историпе культура хăвачĕ пысăк, унпа кирлĕ пек усă курни ялăн çирĕп аталанăвне, çынсен пурнăçĕн пысăк пахалăхне тивĕçтермелле. Паян ялсенче 37 млн çын пурăнать – Раççей халăхĕн 26%.

Ларура РФ ял хуçалăх министрĕ Николай Федоров, регионсен пуçлăхĕсем, общество организацийĕсен, политика партийĕсен представителĕсем сăмах илнĕ. Йышăннă мерăсем ялти пурнăç шайне çĕклеме пулăшнине палăртнă.

Лару хыççăн журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă май Чăваш Ен Пуçлăхĕ республика ялăн социаллă тата инженери инфратытăмне аталантарас енĕпе ăнăçлă ĕçлени çинчен каланă. Паян лайăх шалуллă ĕç вырăнĕсен шутне ӳстерес ыйтăва татса памалла. «Пĕтĕмĕшле илсен Раççейре яллă вырăнсенчи ĕç укçи экономикăри вăтам кăтартуран 2-2,5 хут пĕчĕкрех. Çавăнпа патшалăхăн пуçаруллă çынсене тĕревлемелле. Вĕсем бизнеса аталантарччăр, хушма ĕç вырăнĕсем йĕркелеччĕр», – тенĕ Михаил Васильевич.

**К.АЛЕКСАНДРОВА.**

## Геопортал пуянланнă

***Чăваш Енри вăл е ку муниципалитет йĕркеленĕвĕнчи халăх шутне, йышне, пĕлӳ шайне, унăн пурăнмалли кĕтес пурри-çуккине халĕ ЧР геоинформаци порталĕнче тĕплĕн тишкерме пулать. Интернет-ресурс Чăваш Республикин социаллă пурнăçпа экономика тĕп кăтартăвĕсен тематика web-карттисен комплекчĕпе пуянланнă.***

Çак карттăсене хатĕрленĕ чухне РФ федераци патшалăх статистика службин кăтартăвĕсен усă базипе тата 2010 çулта иртнĕ Пĕтĕм Раççейри халăх çыравĕн пĕтĕмлетĕвĕсен пĕр пайĕпе усă курнă. Ку комплектпа геопорталăн тĕп страницинче метакăтартусен каталогĕнче паллашма май килет. Карттăпа ĕçленĕ чухне "Карта тытăмĕ" уйрăмра çыннăн кирлĕ сие /V паллă/ суйласа илмелле. Ку вăл арçынсен е хĕрарăмсен шучĕ, экономикăра ĕçлекен халăх /хула округĕсем тата муниципалитет районĕсем тăрăх/, çынсен пĕлӳ шайĕ тата ытти те пулма пултарать. Информаци илес тесен курсора кирлĕ муниципалитет тĕлĕнче пусмалла.

Çĕнĕ карттăсем ĕç тăвакан влаç тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕçченĕсемшĕн çеç мар, республика, муниципалитет аталанăвĕпе кăсăкланакан çынсемшĕн пуриншĕн те кăсăклă пулĕç. Геопорталти информаципе тĕрлĕ семинарта, курс, диплом, ăслăлăхтĕпчев ĕçĕсене çырнă чухне усă курма юрать. Кăтартусене кăмăл пуррисем пурте тӳлевсĕрех илме пултараççĕ.

Аса илтеретпĕр: Чăваш Енре геопортала 2013 çулхи çулла хута янă. Хальхи вăхăтра асăннă Интернет-ресурсра Чăваш Республикин интерактив карттипе – унта патшалăх учрежденийĕсен, культура еткерĕн объекчĕсен, массăллă информаци хатĕрĕсен, ирĕклĕ çĕр лаптăкĕсен кăтартăвĕсем, çавăн пекех республикăн инвестици лапамĕсем пирки калакан информаци пур – паллашма пулать. Порталта "Космос ӳкерĕвĕ, 2013 çул", "Ял хуçалăх тематика картти", "Чăваш Республикин муниципалитет йĕркеленĕвĕсен чиккисем" тематика карттисем те пур.

**И.БЕЛОВА**

## Проспект вăхăтлăха хупăнать

Шупашкар хула администрацийĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн çу уйăхĕн 1-10-мĕшĕсенче тĕп хулари Иван Яковлев проспекчĕн реконструкцилекен сыпăкне мĕн пур йышши транспорт валли хупаççĕ. Çак тапхăрта ку сыпăкпа муниципалитет транспорчĕ çеç çӳреме пултарĕ.

Çу уйăхĕнчи уяв кунĕсенче объектра троллейбуссен контакт сетьне çĕнĕ лини çине куçарĕç – ку ĕçе Çĕнтерӳ кунĕ тĕлне вĕçлемелле, çул сарас енĕпе малалла ĕçлĕç. Ĕç калăпăшĕ вара кунта чăннипех пысăк. Унăн пысăк пайне пурнăçланă, çапах тумалли чылайха. Асфальт сарасси кăна та мар. Çумăр шывĕ юхса каймалли шăтăксене йĕркелемелле, бордюрсем вырнаçтармалла, инженери коммуникацийĕсене куçармалла, пĕрлех реконструкци зонинчи территорие тирпейлемелле.

Чăрмавсăр çул çӳрев Республика кунĕ тĕлне йĕркеленсе çитмелле.

**К.НИКОЛАЕВ**

*Уяв*

## Христос чĕрĕлнĕ! Чăн чĕрĕлнĕ!



Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

***Ака уйăхĕн 19-мĕшĕнче çĕрле – ака уйăхĕн 20-мĕшĕнче ир-ирех Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ Варнава Шупашкарти Пукрав Татиана чиркĕвĕнче Христос чĕрĕлнипе çыхăннă уява – Мăн куна – халалласа кĕлĕ ирттернĕ. Унта Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çемйипе, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов тата влаç органĕсен ытти представителĕ те хутшăннă.***

Литурги умĕн священниксем тата православи тĕнне ĕненекенсем урама пархатарлă çулăма кĕтсе илмешкĕн тухнă. Сăваплă çулăма Иерусалимри Христос чĕрĕлĕвĕн чиркĕвĕнчен «Иерусалим валли тăнăçлăх ыйтăр» акципе килĕшӳллĕн илсе килнĕ: малтан – Мускава, унтан ятарлă рейспа – Шупашкара. Çак лампадăпа усă курса çуртасем çутрĕç, вĕсене Варнава митрополит чиркĕве килнисене валеçсе пачĕ. Сăмах май, пархатарлă çулăм хĕлхемне Мăн кун эрнинче Шупашкарти кашни чиркӳрех илме май пулĕ.

Унтан Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ ирхи кĕлĕпе литурги ирттерчĕ. Кирилл Патриархăн Мăн кун саламне вуласа пачĕ. Литурги вĕçленсен вăл пурне те Христос чĕрĕлнĕ ятпа саламларĕ. Çак кĕлĕсене Наци телекуравĕн тӳрĕ эфирĕнче тата унăн Интернетри сайтĕнче те пăхма май килчĕ. Трансляцие Пукрав Татиана чиркĕвĕ çумĕнчи çамрăксен православи «Омофор» клубĕн ертӳçи Илия Тумаков комментарилерĕ.

Мăн куна халалланă кĕлĕсем Чăваш Енри район-хулари 169 чиркӳре иртнĕ, вĕсене пĕтĕмпе 35 пин ытла çын хутшăннă.

Тĕне ĕненекенсем çак эрне тăршшĕпех пĕр-пĕрне: «Христос чĕрĕлнĕ!» – «Чăн-чăнах чĕрĕлнĕ!» тесе саламлаççĕ, хĕретнĕ çăмартапа сăйлаççĕ.

**Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

*Ял хуçалăхĕ*

## 15 район акана тухнă

***Кунсем хĕвеллĕ те ăшă тăнăран çĕр хăвăрт типет. Хресчен тăпрари нӳрĕкпе вăхăтра усă курасшăн. Патăрьелсемпе Пăрачкавсем тырă акма тухни çинчен маларах пĕлтернĕччĕ. Иртнĕ эрне вĕçĕнче вара çак ĕçе тата 13 район хушăнчĕ. Элĕк, Куславкка, Хĕрлĕ Чутай, Муркаш, Çĕрпӳ тата Сĕнтĕрвăрри енсем те çĕр пулса çитсенех хире тухĕç.***

Республикипе 7563 гектар /пĕлтĕр çак вăхăтра – 160 га/ çинчи тăпрана вăрлăх варăнтарнă, тĕпрен илсен – урпапа çурхи тулă. Хальлĕхе Вăрнарсемпе /1725 га е 13,2%/ Патăрьелсем /1574 га – 11,6%/, Комсомольскисемпе /1210 га – 11%/ Шăмăршăсем /960 га – 10,9%/ малта пыраççĕ.

Пĕр вăхăтрах темиçе ĕç пурнăçламалла. 5 районăн акма вăрлăх çитмест. Хĕрлĕ Чутайсен вăл – 74,4, Улатăрсен 89,5 процент çеç. Çав вăхăтрах ăна тасатса пĕтермелле, имçамламалла /хальлĕхе тăваттăмĕш пайĕ çеç хатĕр/.

Кĕрхисемпе нумай çул ӳсекен курăксене çине тăрсах апатлантармалла. Муркашсем – 20,4, Улатăрсем – 23, Вăрмарсем – 28, Тăвайсем 28,5% çеç минерал удобренийĕ хатĕрленĕ.

Çунтармалли-сĕрмелли материал та хăшĕ-пĕрин çителĕксĕр. Дизель топливине Улатăрсем – 45,5, Муркашсем – 49,4, Элĕксем – 55,9, Çĕмĕрлесем 57,5% çеç кӳрсе килнĕ. Автобензин саппасĕ Красноармейскисен – 14, Вăрмарсен 31,3 процент çеç.

**В.ВАЛЕНТИНОВ.**

**Районсем çур акине епле хатĕрленнине тата уй-хир ĕçне мĕнле хутшăннине кăтартни /ЧР Ял хуçалăх министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх, ака уйăхĕн 21-мĕшĕ тĕлне/**

| Районсем | Хатĕрленĕ | | | | Апатлантарнă | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | Паха вăрлăх | | Минерал удобренийĕ | | Кĕрхи культурăсем | | Нумай çул ӳсекен курăксем | |
| | тонна | % | тонна | % | гектар | % | гектар | % |
| Патăрьел | 3825 | 99 | 866 | 52,9 | 2479 | 54,7 | 422 | 6,7 |
| Çĕрпӳ | 3769 | 99 | 587,8 | 50,9 | 1100 | 24,2 | 185 | 4,9 |
| Вăрнар | 2762 | 98 | 1123,9 | 86,8 | 3765 | 82,8 | 394 | 6,3 |
| Елчĕк | 3640 | 96 | 1111,3 | 79,8 | 3806 | 66,7 | 1475 | 16,1 |
| Етĕрне | 2072 | 95 | 452,2 | 40,5 | 1789 | 40,8 | – | – |
| Вăрмар | 2380 | 94 | 304,4 | 28 | 932 | 38,6 | 320 | 8,1 |
| Сĕнтĕрвăрри | 1191 | 94 | 274,2 | 51,2 | 210 | 10,1 | 175 | 4,5 |
| Пăрачкав | 2435 | 93 | 419,2 | 38,1 | 2932 | 52,2 | – | – |
| Красноармейски | 1889 | 92 | 430 | 50,5 | 1784 | 57,2 | 325 | 5,7 |
| Канаш | 2168 | 90 | 478,3 | 50,3 | 1154 | 26,9 | 665 | 15,2 |
| Йĕпреç | 1543 | 90 | 329,3 | 42,9 | 899 | 29,6 | 100 | 1,4 |
| Шупашкар | 2059 | 89 | 577,9 | 62,4 | 1184 | 39,4 | 2247 | 32,6 |
| Элĕк | 1599 | 89 | 247,2 | 29,6 | 225 | 9,7 | 1500 | 39,9 |
| Çĕмĕрле | 501 | 89 | 120,8 | 52,2 | 760 | 59,6 | – | – |
| Тăвай | 2259 | 88 | 175,7 | 28,5 | 720 | 25,6 | 341 | 8,6 |
| Хĕрлĕ Чутай | 730 | 87 | 202,4 | 43,3 | 200 | 11,8 | 150 | 2,4 |
| Комсомольски | 2667 | 86 | 878,4 | 67,5 | 2626 | 57,4 | 1045 | 19,8 |
| Шăмăршă | 1866 | 86 | 229,3 | 31 | 1300 | 50 | 350 | 12,2 |
| Куславкка | 1844 | 82 | 520,7 | 64,5 | 131 | 4,5 | – | – |
| Муркаш | 2386 | 80 | 227,6 | 20,4 | 150 | 3,1 | – | – |
| Улатăр | 1556 | 80 | 195,4 | 23 | 1420 | 75,1 | – | – |
| **Республикипе** | **45141** | **91** | **9752** | **48,7** | **29566** | **40,9** | **9754** | **9** |

## Муфтие тав тунă

Раççей Президенчĕ Владимир Путин 2014 çулхи ака уйăхĕн 4-мĕшĕнчи хушупа килĕшӳллĕн Тĕп регионăн, Чăваш Ен тата Мускав муфтине Альбир Крганова нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн тата общество ĕçне хастар хутшăннăшăн тав тунă.

Раççей мăсăльманĕсен тĕн лидерне Тав хутне РФ Президенчĕн Администрацийĕн ертӳçин пĕрремĕш çумĕ Вячеслав Володин панă.

«Ку – манăн ĕçе чи çӳллĕ шайра хаклани, эпĕ çакăншăн, паллах, мăнаçланатăп», – тенĕ Альбир Крганов муфти.

**КУН хыççăн КУН** ☎ 56-04-26

## Чăваш чĕлхин кунне халалланă

***Элĕкри тĕп библиотекăра «Чĕлхем, тăван чĕлхем» курав уçăлнă. Ăна чăваш чĕлхин кунне халалланă. Экспозицире – И.Я.Яковлевăн, Н.А.Андреевăн (Урхин), В.К.Магницкин, Н.И.Ашмаринăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне, çавăн пекех чăваш историне, культурине, йăли-йĕркине çутатакан кĕнекесем.***

Асăннă выставкăн тĕп тĕллевĕ – чăваш чăлхине аталантарасси, наци культурине, йăли-йĕркине упрасси.

Кунтах Иван Яковлевăн «Халалĕпе» паллашма пулать. Чăваш халăхĕ хăйĕн чĕлхипе, юррисемпе мăнаçланать. «Манăн халăхăм çĕр пин сăмаха, çĕр пин юрра, çĕр пин тĕрре упраса хăварнă»,– тенĕ вун тăххăрмĕш ĕмĕр вĕçĕнче И.Я.Яковлев. Вĕсен йышĕнче юрăсем пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнаççĕ. Куравра чăваш музыка культурин ылтăн фондне кĕнĕ чăваш халăх юррисен пуххисем те вырăн тупнă.

**А.ГРОМОВА.**

## «Эпĕ яланах сирĕнпе»

***Çапла ят панă Канашри тĕп библиотекăра иртнĕ уяв каçне кĕнеке управçисем. Ăна Чăваш халăх поэчĕ Г.Н.Айхи çуралнăранпа 80 çул çитнине халалланă. Унта Канашри 10-мĕш шкулта 11-мĕш класра вĕренекенсем хутшăннă.***

Вулавăшри халăха кĕнекепе тивĕçтерекен пай ертӳçи И.Ильина çамрăксене Айхин пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен каласа панă. Яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç «Круг жизни Геннадия Айги» слайд-фильм пăхнă, «Геннадий Айги. Поэзия тишины» электрон монографийĕпе паллашнă. Кунтах – интереслĕ сăн ӳкерчĕксем, видео тата аудиоматериалсем те. Уявра аслă класра вĕренекенсем Геннадий Айхин сăввисене вуланă, «Эпĕ яланах сирĕнпе» курава пахаланă.

**Р.ИВАНОВА.**

## Операторсем канашларĕç

***Красноармейски районĕнче «Тăватă пинлисен клубĕ» 2002 çулта йĕркеленнĕ. Пĕлтĕрхи кăтартусемпе унта машинăпа ĕне сăвакан 16 оператор кĕнĕ.***

Вĕсем – «Красное Сормово», «ВОЛИТ», «Караево» пĕрлешӳсенчен тата Аркадий Степановпа Венера Васильева хресчен-фермер хуçалăхĕсенчен. Яманакри сĕт-çу фермин дояркисем Лариса Еремеевăпа Татьяна Смирнова, Светлана Даниловăпа Ева Иванова, Татьяна Абрамовăпа Алиса Маркова иртнĕ çул кашни ĕнерен вăтамран 5760-5674-5651 килограмм сĕт сунă. Кăçал кăтартусене 6000 килограма çитересшĕн. Машинăпа ĕне сăвакан операторсене район центрĕнче пухса район администрацийĕн пуçлăхĕ Андрей Шестаков саламланă, Дипломсемпе, парнесемпе чысланă.

**В.ДАНИЛОВ.**

## Конкурса пĕтĕмлетнĕ

***Шупашкарта автор проекчĕсен Пĕтĕм Раççейри «Манăн çĕр-шыв – манăн Раççей» конкурсăн республикăри тапхăрне пĕтĕмлетнĕ.***

Конкурса Шупашкар, Çĕмĕрле, Улатăр хулисенчи, Канаш, Сĕнтĕрвăрри, Елчĕк, Етĕрне тăрăхĕсенчи тĕрлĕ вĕренӳ учрежденийĕнче ăс пухакан çамрăксем 44 ĕç тăратнă. Жюри членĕсем 26 проекта пысăк хак панă, конкурсăн финалне хутшăнма сĕннĕ.

Çĕнтерӳçĕсемпе призерсене вунă енĕпе палăртнă. Тĕслĕхрен: «Манăн çĕр-шыв» номинацире пĕрремĕш вырăн йышăннă Вера Никонорова «Ас тăвăм кĕнеки» электрон архив хатĕрлессипе пысăк ĕç пуçарасшăн. Анастасия Леонтьева çамрăк педагог професси вĕрентĕвĕнче ал ĕç ăстисен опычĕпе усă курма, Екатерина Ситулинăпа Галина Иванова сусăр çынсен социаллă службин онлайн тытăмне йĕркелеме сĕннĕ. Шупашкар районĕнчи Мальвина Исаева çынсене Кӳкеç поселокне тирпейлĕхре тытма чĕнет.

**Е.АНДРЕЕВ.**

## Тĕнче кубокĕ хăçан иртесси паллă

***Сенегал тĕп хулинче Дакарта çăмăл атлетика федерацийĕсен Пĕтĕм тĕнчери канашĕн ларăвĕ иртнĕ. Унта РФ çăмăл атлетика федерацийĕн президенчĕ Валентин Балахничев хутшăннă.***

Ларура тĕрлĕ ыйту пăхса тухнă. Çăмăл атлетика федерацийĕсен Пĕтĕм тĕнчери канашĕн ертӳçи Ламин Диак савăнăçлă хыпар пĕлтернĕ: 2016 çулта Хусанта юниорсен çăмăл атлетика енĕпе тĕнче чемпионачĕ ирттерме йышăннă. Спортсменсем Пĕтĕм тĕнче Универсиади валли хатĕрленĕ спорт объекчĕсенче ăмăртĕç.

Ларура 2016 çулта Шупашкарта хăвăрт утакансен хушшинче иртекен Тĕнче кубокĕн кунне палăртнă. Ăмăрту çу уйăхĕн 7-8-мĕшĕсенче кӳлмек хĕрринче иртмелле. Икĕ кунра спортсменсем медальсен 5 комплекчĕшĕн тупăшĕç. Юниорсем – 10, хĕрарăмсем – 20, арçынсем 50 километрлă дистанцисенче вăй виçĕç. Аса илтеретпĕр: 2016 тата 2018 çулсенче Чăваш Енре хăвăрт утакансен Тĕнче кубокĕсене йĕркелеме ирĕк панă.

**А.МИХАЙЛОВ.**

**Çанталăк çинчен**

Паян хĕвеллĕ çанталăк пулать. Çил кăнтăртан çеккунтра 6 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 14, çĕрле 8 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 759 мм, сывлăшри нӳрĕк 49 процент.

**Кун тăршшĕ 14 сехет те 43 минут.**

## АВТОИНСПЕКТОРШĂН МАР, ХАМĂРШĂН



**ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ**

**Производствăра ĕç çемми шыв юххи пек пĕр тикĕс те кал-кал йĕркеленнĕ вăхăтра эпир хамăра лăпкă туйса нимĕн çинчен те шухăшламастпăр. Уяр кун çиçĕм çиçсе аслати кĕмсĕртетнĕн инкек-синкек е пĕр-пĕр пăтăрмах сиксе тухсан вара ниçта кайса кĕрейместпĕр: вĕткеленетпĕр çеç. «Чан çапма тахçанах вăхăт çитнĕ те çав», – тетпĕр те ассăн сывласа кĕçĕтмен пуça хыçатпăр.**

**Республикăра çулленех пушçурла уйăхĕсенче хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсен, çур акине хутшăнакан агрегатсен техосмотрĕ иртет. Автотранспортăн, ял хуçалăх техникин пĕр пайĕ хĕлĕпех гаражра е ангарта ларнă. Халĕ кирлĕ пулнă, анчах çула тухма хатĕр-и вĕсем, шанчăклă-и? Патшалăх автоинспекцийĕ çакна çирĕп тĕрĕслесе палăртать. ЧР патшалăх тĕп инженер-инспекторĕ Владимир Димитриев каланă тăрăх – техосмотр чылай чухне тивĕçлĕ те çӳллĕ шайра иртмест, пур техника та тĕрĕслеве хутшăнмасть. Автоинспекци усă курма ирĕк паман транспортпа çула е хире тухнăран водитель е механизатор час-часах шар курать, тепĕр чухне вилмеллех аманать.**

**2013 çулта республикăри агропромышленноç комплексĕнче мĕн пурĕ 22525 техника хатĕрне шута илнĕ, анчах унăн 56,1 проценчĕ çеç юсавлă. Ял хуçалăх предприятийĕсем çулленех техосмотрта графикпа килĕшӳллĕн пулаймаççĕ. Вĕсене яланах вăхăт çитмест имĕш.**

**Автоинспекторсем шута илнĕ техникăн 63 процентне тĕрĕсленĕ те право йĕркине 729 хут пăснине палăртнă, 653 протокол çырнă. Хăрушсăрлăх техникине пăхăнмаран хирте улăм купи хыпса илнĕ, трактор çаврăнса ӳкнĕ… Инкекпе вĕçленнĕ ытти тĕслĕх те пур.**

**Чи малтанах механизаторсенчен çирĕпрех ыйтмалла. «Эпир уйра çеç ĕçлетпĕр вĕт. Çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекторĕсем пур пĕр пире кунта килсе курмаççĕ. Пĕрер черкке ĕçнĕшĕн мĕн пулать», – тесе ака пуçланă ятпа эрех-сăрапа айкашасси ан пултăрччĕ. Хуçалăх инженерĕсен хире тĕрĕслев рейдне тухассине çирĕп йĕркене кĕртмелле.**

**Техосмотрта пулман çурри çĕмрĕк машинăпа е тракторпа та ĕçлес марччĕ. Вăл юсавлă пулни автоинспекторшăн мар, хамăршăн вĕт. Ĕмĕрĕ те вăрăмрах пулĕ, водительсемпе механизаторсем те инкек-синкекрен сыхланĕччĕç.**

**Районсенче лару-тăру еплерех-ха? Красноармейскинче çул çинче йĕркеллĕ çӳрес ыйтупа комиссиларăвĕ иртнĕ. 2013 çулхи тата кăçалхи малтанхи уйăхсенчи ĕç-пуçа тишкернĕ. «Волит» ООО тракторисчĕ ӳсĕрпе трактора «çаврăнса çапнă». Хăй аманнă, трактора та юсамалла.**

**Улатăр тăрăхĕнче пĕлтĕр 138 техникăна шута илнĕ, 64-шĕ /46,4%, 2012 ç. – 62,1%/ çеç тĕрĕслев хакне тивĕçнĕ. Çав шутра: тракторсем – 58 /66,3/, прицепсем – 10 /60/, тырă выракан комбайнсем 24,2 /58,1/ процент çеç юсавлă. Яваплăх çинчен маннăши, техникăна техосмотрта лайăх хак парасси 2012 çулхинчен нумай чакнă.**

**Пăрачкав районĕнчи Ленин ячĕллĕ, «Маяк», Горький ячĕллĕ ял хуçалăх кооперативĕсен ертӳçисен шухăшĕпе – техника кивĕ, ăна тивĕçлĕ шайра тытма йывăр. Çав вăхăтрах «Пăрачкав крахмалĕ» ОООра çирĕм çул ытла усă кураççĕ пулсан та вăл çĕннинчен нимĕнпе те кая мар. Шанса панă машинăна е трактора епле тытасси-упрасси хуçинчен хăйĕнчен те нумай килнине манас марччĕ. Типтерлĕ пулнине мĕн çиттĕр? Манăн шухăшпа лайăх механизаторсене укçан хавхалантарсан ытлашши пулас çук.**

**Хĕрлĕ Чутай енче 2013 çулта машина-трактор паркĕн 49 проценчĕ çеç техосмотрта пулнă. «Коминтерн», «Нива», «Свобода» хуçалăхсен пĕтĕм техники тĕрĕслев витĕр тухнă, ыттисен – çук. Юсавсăрри çунтармалли-сĕрмелли материала нумай тăкаклать, çут çанталăка варалать, çынсен умне хăрушлăх кăларса тăратать. Çак çитменлĕхсене пĕлсех хăш чухне унпа та усă кураççĕ. «Мĕн тăвăн-ха лайăххи çук пулсан», – теççĕ.**

**Çĕмĕрлесен кăтартăвĕ пуринчен те пĕчĕк. Пĕлтĕр транспорт хатĕрĕн 17,2 проценчĕ çеç юрăхлăччĕ. Çав вăхăтрах Комсомольскисемпе /86,7%/ Вăрмарсен /84,4%/ ку енĕпе лару-тăру аван. Пĕрремĕшĕсем 2012 çулхинчен 24,7% ӳсĕмлетнĕ.**

**2013 çулта республикăра тырă выракан 547 комбайна /хире кăларма палăртнин 63,5%/ çеç юсама вăй çитернĕ. Вăл ĕçе те пулин питĕ вăраха янă. Çавăнпах вырма тăсăлчĕ, механизаторсем çĕр улми пуссине çийĕнчех куçаймарĕç. «Иккĕмĕш çăкăр» вăраха кайнă йĕпе-сапана пула хире нумай юлчĕ.**

**Вырма пуçланнă кунсенче хире 200-е яхăн комбайн çеç тухнăччĕ – юсава юлса тытăннă пулас. Çурла уйăхĕн 17-мĕшĕнче – 700 ытла. 547-шĕ çеç юсавлă пулсан, пĕр пайĕ – юсавсăр, унпа çаплипех ĕçленĕ, апла тăк йĕркене пăснă.**

**Кăçал ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисемпе специалисчĕсем пĕлтĕрхи йăнăшсене шута илсе тĕрĕс пĕтĕмлетӳсем тăвасса, водительсемпе механизаторсем хăрушсăрлăх техникине пăхăнса инкек-синкекрен сыхланасса шанас килет. Çул çине тата уй-хире юсавлă та шанчăклă техникăпа çеç тухасчĕ.**

**Валентин ГРИГОРЬЕВ**

*Тĕл пулу*

# Ыйтусем хуравсăр юлмаççĕ

***Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çак кунсенче РФ Коммунистсен партийĕн /РФКП/ Чăваш республика уйрăмĕн ертӳлĕхĕпе тата хастарĕсемпе тĕл пулчĕ. Мероприятие РФКП Чăваш республика комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ, РФ Патшалăх Думин депутачĕ Валентин Шурчанов, ЧР Патшалăх Канашĕнчи РФКП фракцийĕн ертӳçи Дмитрий Евсеев, партин районсемпе хуласенчи комитечĕсен секретарĕсем, общество организацийĕсен представителĕсем хутшăнчĕç.***

Михаил Игнатьев халăхпа тата тĕрлĕ парти представителĕсемпе уçă та уллтавсăр калаçу ирттермешкĕн яланах хатĕр пулнине палăртрĕ. "Çынсемпе тĕл пулнă чухне эпĕ нихăçан та, никама та ыйту памашкăн чарман. Муниципалитетсенче социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн кăтартăвĕсене пĕтĕмлетнĕ чухне те вырăнта пурăнакансем хăйсене мĕн пăшăрхантарнине уççăн пĕлтерме пултарчĕç. Эпĕ общество организацийĕсен тата кирек мĕнле МИХсен представителĕсене те хамăн пресс-конференцисене хутшăнма ыйтатăп. Конструктивлă критика тата конкретлă ыйтусем нихăçан та хуравсăр юлмаççĕ," – терĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ. Вăл тĕл пулăва килнисене республикăн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн 2013 çулхи кăтартăвĕсемпе кĕскен паллаштарчĕ, пĕлтĕр мĕн туса çитерейменни çинче те чарăнса тăчĕ. Умри тĕллевсем пирки асăнчĕ.

Икĕ сехет ытла тăсăлнă тĕл пулура район-хула комитечĕсен секретарĕсем тĕрлĕ ыйту пачĕç. Тĕслĕхрен, "Ĕç ветеранĕ" ята илме кирлĕ ĕç стажне 35 çулччен /хĕрарăмсемшĕн/ тата 40 çулччен /арçынсемшĕн/ чакармашкăн, ăна тивĕçнисем валли медаль çирĕплетмешкĕн сĕнчĕç. Михаил Васильевич "Ĕç ветеранĕ" медаль пирки тепĕр хут шухăшласа пăхма шантарчĕ, "Çынсем ыйтаççĕ пулсан – тăвăпăр", – терĕ. 40 тата 45 çул ырми-канми ĕçленисене хисеплĕ ят парасси çинчен хушу тухсан икĕ çулта республикăри 21 пин ытла çын ĕç ветеранĕсен йышне кĕнине пĕлтерчĕ. "Ĕç стажне тӳрех 5 çул мар, малтан – 2,5 çул, кăштахран вара тата тепĕр çавăн чухлĕ чакарма тăрăшăпăр", – М.Игнатьевăн çак сăмахĕсене тĕл пулăва килнисем алă çупса йышăнчĕç. Паллах, асăннă саккуна паян-ыранах алă пусма пулать, çапах малтан республика бюджечĕн тăкаксен пайне çĕнĕрен пăхса тухмалла-çке, çакăн валли укçа тенкĕ тупмалла.

Куславкка район больницинчи кадрсен ыйтăвĕ вырăнти коммунистсене хытах пăшăрхантарать. Паянхи кун унта 10 ытла врач çитмест иккен. Куславкка хуласен йышне кĕнĕрен "Земство тухтăрĕ" проект çав больницăна ĕçлеме килекен тухтăрсене пырса тивмест, çавăнпа ку сыватмăша вырнаçас текен çукрах. Чăваш Ен Пуçлăхĕ унта тепĕр программа – "Ял территорийĕсен 2020 çулччenхи çирĕп аталанăвĕ" – ĕçленине каларĕ. "Эпĕ хула пуçлăхне çапла сĕнтĕм: "Хăвăр тăрăхра çуралса ӳснĕ хĕрсемпе каччăсене хатĕрлĕр, вĕсем вĕренсе тухсан тăван кĕтесех таврăнччăр, çĕр лаптăкĕ илччĕр, çурт хăпартчăр е хваттер туянччăр." Çамрăк специалистсем пурăнмалли çурт-йĕр хакĕн 70% чухлĕ тавăрса памалли мар субсиди илме пултараççĕ," – терĕ Михаил Игнатьев. Çамрăк специалистсене малтанхи вăхăтра хушма укçа парса пулăшсан, пурăнмалли кĕтеспе тивĕçтерсен, хавхалантару ытти мелĕ сĕнсен кадр ыйтăвне татса пама пулатех!

Улатăр представителĕ хăйсен тăрăхĕнче РФКП членĕсене ертӳçĕ должноçĕсене шанса пама тăрăшманнине пĕлтерчĕ. Михаил Игнатьев Чăваш Ен Пуçлăхĕ çумĕнче кадрсен резервĕ пуррине, муниципалитетсенче те çакнашкал меллпех ĕçленине палăртрĕ. Должноçсене резерври çынсене тата конкурс ирттерсе уйăрса лартмаллине каларĕ. Конкурссене вара кирек хăш парти членĕ те хутшăнма пултарать. Комиссисенче министерство-ведомство специалисчĕсем çеç мар, депутатсем те, Общество палатин членĕсем те, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тата тĕрлĕ общество организацийĕсен представителĕсем те пуррине аса илтерчĕ. Улатăрти тĕслĕх тĕлĕшпе служба тĕрĕслевĕ ирттерĕпĕр терĕ.

Тĕл пулура шкулсенче пионер организацийĕсене чĕртсе тăратассипе çыхăннă сĕнӳ те пулчĕ. Çавăн пекех халăха таса шывпа тивĕçтерессипе, ĕççĕрлĕхпе, "Вăрçă ачисем" саккуна йышăнассипе, çул-йĕр тăвассипе, пурăнмалли çурт-йĕрпе тата коммуналлă хуçалăхпа, усă курман çĕрсене çаврăнăша кĕртессипе тата ыттипе çыхăннă ыйтусене хускатрĕç. Михаил Игнатьев кашнинех тĕплĕ хурав пачĕ, хăш-пĕрне мĕнле пурнăçланине хăй тĕрĕслесе тăрассине пĕлтерчĕ. Валентин Шурчанов Чăваш Ен Пуçлăхне тĕл пулăва килнĕшĕн тав турĕ, "Республика ырлăхĕшĕн пирĕн пĕрле ĕçлемелле", – терĕ. РФКП членĕсем çакнашкал тĕл пулусене район-хула комитечĕсенче те ирттерсен аван пулĕччĕ тесе пĕтĕмлетрĕç.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

# Саккун улшăнăвĕсене тĕпе хурса...

***Федерацин миграци службин /ФМС/ Чăваш Республикинчи управленийĕ республика халăхне пурăнакан вырăнта регистрациленес тата Раççей Федерацийĕн гражданинĕн паспортне илес ыйтусемпе управленин территорири уйрăмĕсене вăхăтра çитме сĕнет, мĕншĕн тесен паспортпа регистраци йĕркисене пăснăшăн саккунпа килĕшӳллĕн явап тыттарма пултараççĕ.***

Уйрăммăн илсен федерацин 2013 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи "Раççей Федерацийĕн уйрăм саккун акчĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен" 376-ФЗ №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕн гражданĕсен регистраци учечĕн тытăмне лайăхлатассипе тата регистраци йĕркисене пăснăшăн яваплăха ӳстерессипе çыхăннă хăш-пĕр улшăну вăя кĕнĕ. Çавăн пекех РФ гражданинĕн хăй пурăнакан вырăнта суя /фиктивлă/ регистрацийĕн ăнлавне кĕртнĕ, уншăн уголовлă е административлă явап тыттараççĕ. Унсăр пуçне пурăнмалли пӳлĕмсен харпăрлăхçисем /тара илекенсем/ валли РФ гражданинĕ регистрацисĕрех пурăнни çинчен регистраци учечĕн органне палăртнă вăхăтра пĕлтермелли тивĕçе тата асăннă органсене пĕле тăркачах суя кăтартусем панăшăн явап тыттармаллине кĕртнĕ.

Çак саккунпах РФ Уголовлă кодексне çĕнĕ 322.2 статьяна кĕртнĕ, унпа килĕшӳллĕн РФ гражданинĕн суя регистрацийĕшĕн пурăнмалли çурт-йĕр харпăрлăхçисене /тара илекенсене/ штраф тӳлеттерме /100 пин тенкĕрен пуçласа 500 пин тенкĕ таран е айăпланаканăн виçĕ çул таран тапхăрти шалăвĕн е урăх тупăшĕн виçи чухлĕ/, е ирĕксĕрлесе 3 çул таран ĕçлеттерме, е палăртнă должноçа йышăнмалли тата палăртнă ĕçпе аппаланмалли ирĕксĕр виçĕ çул таранччен /е унсăрах/ хăварма пултараççĕ.

Федераци çак саккунĕпех РФ административлă право йĕркине пăсни çинчен калакан кодексĕн 19.15 статйине улшăнусем кĕртнĕ. Ăна 19.15, 19.15.1 тата 19.15.2 статьясене пайланă, РФ КоАП статйисен асăннă нормисем тăрăх санкцисене пушшех çирĕплетнĕ. Тĕслĕхрен, хваттерте е çуртра пурăнакан çыннăн гражданин кам пулнине ĕнентерекен документ /паспорт/ пулмасан е вăл суя тăк 2 пинрен пуçласа 3 пин тенкĕ таран штраф парса явап тыттараççĕ. Этем пӳлĕмре /хваттерте/ регистрацисĕрех пурăнать тĕк е ăна çурт-йĕр харпăрлăхçи /тара илекен/ саккунпа çирĕплетнĕ вăхăтран ытларах пурăнма ирĕк парать тĕк граждансене 2 пинрен пуçласа 3 пин тенкĕ таран административлă штраф тӳлеттерме пултараççĕ; çурт харпăрлăхçисене /тара илекенсене/ – 2 пинрен пуçласа 5 пин тенкĕ таран; юридици сăпачĕсене – 250 пинрен пуçласа 750 пин тенкĕ таран.

РФ гражданинĕн пурăнакан вырăнти регистрацийĕн йĕркисене пăссан, енчен те çакă уголовлă айăплав сĕмĕллĕ пулмасан, граждансене – 2 пинрен пуçласа 3 пин тенкĕ таран, пурăнмалли çурт-йĕр харпăрлăхçисене /тара илекенсене/ – 2 пинрен пуçласа 5 пин тенкĕ таран, должноçри çынсене – 25 пинрен пуçласа 50 пин тенкĕ таран, юридици сăпачĕсене 250 пинрен пуçласа 750 пин тенкĕ таран административлă штраф пама пултараççĕ.

РФ гражданинне пӳлĕм панă харпăрлăхçă /тара илекен/ асăннă çын палăртнă çĕрте пурăнни пирки регистраци учечĕн органне саккунпа çирĕплетнĕ вăхăтра сăлтавсăрах пĕлтермесен е çакăн пирки суя кăтартусем парсан, енчен те ку ĕççем уголовлă айăплав сĕмĕллĕ пулмасан, граждансен тĕлĕшпе – 2 пинрен пуçласа 3 пин тенкĕ таран, юридици сăпачĕсен тĕлĕшпе 4 пинрен пуçласа 7 пин тенкĕ таран штраф хума юрать.

Регистраци учечĕн органне РФ гражданинĕн хăй пурăнакан вырăнта регистрациленмелли е унтан тухмалли документчĕсене йышăнассишĕн тата парассишĕн яваплă çын РФ саккунĕсемпе çирĕплетнĕ вăхăта пăхăнмасан е асăннă органа ятарласа суя документсем парсан, енчен те ку ĕççем уголовлă айăплав сĕмĕллĕ пулмасан, ăна 3 пинрен пуçласа 5 пин тенкĕ таран штраф тӳлеттерме пултараççĕ.

Республикăра пурăнакансем Раççей ФМСĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн патшалăх пулăшăвĕсене территорири уйрăмĕсенче, Патшалăх тата муниципалитет пулăшăвĕсен пĕрлехи порталĕ /www.gosuslugi.ru/ урлă тата нумай функциллĕ центрсенче илме пултараççĕ. Кирлĕ документсен перечене управленин официаллă Интернет-сайтĕнче тупма пулать.

■ **Эмилия АНДРЕЕВА,**
**ФМС управленийĕн уйрăмĕн пуçлăхĕ**

*Уçнă çерем*

# Пурнăçăма техникăна халалларăм

***1959 çулта Етĕрнери ял хуçалăх училищинче 4 уйăх вĕреннĕ хыççăн эпĕ Элĕк районĕнчи Мăн Вылăри Ульянов ячĕллĕ хуçалăхăн техника паркне производство практикине вырнаçрăм, комбайнерсемпе трактористсене пулăшрăм. С-4 М комбайна Сурăмварринчи механизаторпа пĕр эрне юсарăмăр. Кайран вăрмантан йывăç турттарма ячĕç. 4 кун ĕçлерĕм пулсан та тракторист МТЗ-5 рульне шанса памастчĕ. Тарăхнăччĕ çавăншăн.***



● *Владимир Егоров – хыçалти ретре, сылтăмри.*

Телее, Федор Соколов Етĕрнерен ырă хыпар илсе килчĕ. Училище директорĕ çерем çĕр уçма ямашкăн 60 вĕренекенрен 2 ушкăн хатĕрлеме тытăннă. Эпĕ çав кунах Етĕрнене çул тытрăм.

Мана пĕрремĕш ушкăна кĕртрĕç. Иккĕшне те Михаил Чадков мастер ертсе пыратчĕ. Сехет çурăран Çĕмĕрлене çитрĕмĕр. Тепĕр кунне, çурла уйăхĕн 2-мĕшĕнче, Мускав-Омск пуйăс çине лартăмăр. Уйрăмах Урал тăвĕсем асра юлчĕç.

Çул çинче ялти икĕ çамрăка – Виталий Красновпа Иван Васильева – тĕл пултăм. Павлодар хулинче чарăнтăмăр. 2-3 хутлă çуртсемсĕр пуçне саманран тунă пӳртсем те пур.

Вокзалтан 2 автобуспа Иртыш шывĕ урлă каçса Ермак районĕнчи Джолнудук /казахларан – «çăл патне пыракан çул»/ совхоза çитрĕмĕр. Эпĕ хамăр районти Ишпарайккăри Юрий Александровпа 5-мĕш трактор бригадине вырнаçрăм. Кунта тыр-пула çак йĕркепе пухса кĕртнĕ: малтанах лафет жаткипе çулнă, кушăхсан комбайн çапса тĕшĕленĕ.

Пĕрремĕш кунне 12 гектар лаптăкри тырра çултăмăр, иккĕмĕш кунне – 24. Каçхи 8 сехетре агрегат пăсăлчĕ. Юсанă чухне чутах урасăр юлаттăм. Мана 40 çухрăмри район сыватмăшне леçрĕç.

Тăхăр кун иртсен, сипленсе çитсен, 8-мĕш бригадăна вырнаçтарчĕç. Унччен палаткăсенче выртса тăнă, кунта – çĕр урайĕллĕ пӳртсем. Григорий Пархоменко бригадир Украинăран килнĕ Павлик Горунь трактористпа тырă вырнă анасене сухалама хушрĕ. Çав хушăрах улăм куписене çунтарса пымалла. Вырăнĕ тӳрем, пĕр еннелле – 4-5 çухрăм. Шел, С-80 тракторпа эпĕ ĕçлесе курман, тапратма пĕлместĕп. П.Горунь мана пĕччен хăварсан самаях нушалантăм. Каярах 4 тĕрлĕ техникăпа ĕçлесе куртăм.

Авăн уйăхĕн вĕçĕнче совхоз кантурне пухăнтăмăр. Эпĕ самаях ĕçлесе илтĕм. Темиçе кунран киле таврăнтăм. Пурнăçăмра ĕç укçипе пĕрремĕш хут тăхăнмалли япаласем, пысăк чăматан туянтăм. Авăнăн 20-мĕшĕнче Етĕрнере вĕренме тытăнтăмăр.

Шăпа пĕрремĕш профессипе çыхăнчĕ. Пединститут дипломĕнче çапла çырнă: «Учитель биологии и основ сельскохозяйственного производства». Студент чухнех 4-мĕш курс хыççăн Советскинчи училищĕре «Технология механизированных работ» предмет вĕрентрĕм. Крымсарайкăри вăтам шкулта 1 çул вĕрентсе 18 арçын ачана, Тавăтри вăтам шкулта 24 çул хушшинче 612 йĕкĕте тракторист профессине илме пулăшрăм.

■ **Владимир ЕГОРОВ**

*Тăван чĕлхе*

# Халĕ Интернет та чăвашла калаçать

***РФ пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ, Çĕрпӳ районĕнчи Сăнав поселокĕнчи вăтам шкулта ачасене чĕрĕк ĕмĕр ытла пĕлӳ паракан Татьяна Петрова конкурс-фестивальте çулленех пултарулăхпа палăрать. Кăçал та Татьяна Николаевна Çĕрпӳ тата Сĕнтĕрвăрри районĕсен хушшинче иртнĕ уçă уроксен фестивалĕнче – пĕрремĕш, çак енĕпех республика шайĕнче иккĕмĕш вырăн йышăннă. Вĕренекенĕсем те унран ырă тĕслĕх илеççĕ, тĕрлĕ шайри ăмăртусенче, конференцисемпе олимпиадăсенче малти вырăнсене йышăнаççĕ. Çитĕнӳ мĕнрен килет-ха? Т.Петрова унăн вăрттăнлăхĕсемпе паллаштарать.***



● *Татьяна Петрова.*

– Тăван чĕлхепе литературăна, тăван ен культурине вĕрентесси – маншăн калама çук пысăк чыс. Пирĕн ĕç яваплă та пархатарлă: çамрăк ăрăва ашшĕ-амăшĕн ытарайми илемлĕ те çепĕç чĕлхине чунчĕре юратăвĕпе ăша хывма вĕрентес, сĕткенлĕхĕпе паркалантарас килет. Ĕмĕт-тĕллеве пурнăçлама шкулта халĕ майсем çителĕклĕ. Çав вăхăтрах илĕртӳ, туйăм тата ăс-хакăл мелĕпе те усă куратпăр. Пĕр кунрах е эрне-уйăхрах çимĕç памалли ĕç мар пирĕн, анчах вăл тарăн тымар ярасса, вăхăт çитсен савăнтарасса шанатпăр.

Саманапа пĕрле чĕлхе те аталанать, сумĕ çĕкленет. Халĕ Интернет та чăвашла калаçать. Вĕрентекен çĕнĕ технологисемпе анлă усă курать, ачана пултарулăхĕпе талантне уçса пама тăрăшать, кун-çул уттинчен юлмасть. Паллах, хамăрăн та нумай улшăнмалла.

25 çул хушшинче çĕр-çĕр çамрăка пурнăç çулĕ çине кăлартăм. Уйрăмах пултаруллисемшĕн вăй-хал та, вăхăт та шел мар. Вĕсем хăйсен талантне ăçта кăна тĕрĕслемерĕç пулĕ? Тăван республика чысне Раççей шайĕнче хӳтĕлеме пултарнăшăн епле-ха савăнмăн? Иртнĕ виçĕ вĕренӳ çулне аса илес килет. Надежда Степановăна, Наталия Ивановăна, Ирина Терентьевăна, Анастасия Салдакеевăна, Екатерина Николаевăна, Александр Леонидова тата Василий Иванова яланах ырăпа аса илетĕп.

Ку вĕренӳ çулĕнче çĕнĕ ятсем палăрчĕç: Виолетта Аниферова, Анна Егорова, Карина Михайлова, Ксения Витальева, Вероника Андриянова... Виолетта, Анна, Вероника – çĕнтерӳçĕсем.

Эпĕ проект технологине çине тăрсах пурнăça кĕртетĕп. Ăна пула ачасен уроксенче вĕренес туртăмĕ ӳсет. Çĕнĕ вĕренӳ стандарчĕ те пире пурнăçра тĕл пулакан йывăрлăхсенче çухалса кайман çынсем хатĕрлеме ыйтать. Икĕ кружок ертсе пыратăп: "Çамрăк çыравçă" тата "Радиокорреспондент". Вĕсене 20 ача çӳрет. Пĕрремĕшĕнче сăвăкалав çырма хăнăхаççĕ, тепринче Чăваш наци радиовĕпе "Мĕн вăл туслăх?", "Сăпайлăх çынна илем кӳрет", "Эпир – сывă пурнăçшăн" тата ытти темăпа калаçусем йĕркелеççĕ.

Юратса тунă ĕçĕн пархатарĕ пурах. Эпĕ вĕрентнĕ 20 ытла ача чăваш чĕлхипе литература учителĕн çулне суйласа илчĕç. Çакă мана малашне те тăрăшма хавхалантарать, вăй-хал хушать.

Анна Артемьева, Евгений Степанов, Дарья Карикова /11 класс/, Екатерина Николаева тата Василий Иванов /9"б" класс/ Чăваш чĕлхи кунне тата çуралнă кунĕ ячĕпе тăван халăхăмăра çутта кăларуçă И.Я.Яковлева халалласа çырнă сочинени конкурсĕнче ырă ята тивĕçрĕç. Вĕсем Аслă Вĕрентекенĕмĕр чăваш халăхне панă Халала тĕплĕн тишкерсе пысăк ĕç тунă. "Иван Яковлевич вĕрентĕвĕ вилĕмсĕр. Унăн "Чăваш халăхне панă халалĕ" паянхи кун та пĕлтерĕшне çухатман. Вăл пирĕншĕн – пурнăç кĕнеки", – тенĕ Екатерина Николаева.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**
**çырса илнĕ**

# ВУЛАКАН ЫЙТАТЬ, СĔНЕТ, АСĂРХАТТАРАТЬ

## Ял халăхĕ ырлать

Куславкка районĕнчи Кунерти фельдшерпа акушер пунктĕнче Светлана Смолева чылайранпа ку тăрăхри халăх сывлăхне сыхлассишĕн тăрăшать: кӳршĕллĕ Ырашпулăхра пурăнакансен сывлăхне эрнере икĕ хут хăйсем патне кайса тĕрĕслет, сиплев учрежденийĕнче Кунерсене куллен йышăнать. Кирлĕ тĕк кану е уяв вăхăтне те пăхмасть, чирлĕ çын патне васкать. Унсăр пуçне кăçалтанпа фельдшерсен васкавлă пулăшу машинипе черетпе район çыннисем патне тухса çӳреме тивет. Çакă кадрсем çитменнипе çыхăннă.

Светлана Леонидовна ĕçĕпе ял халăхĕ кăмăллă, ăсталăхĕшĕн, ăшă кăмăлĕшĕн, тараватлăхĕшĕн ăна пурте хисеплеççĕ.

■ **Нина ЧЕРНОВА.**
Куславкка районĕ

## Пуç măйран… çӳлерех

Чăх какайĕ, унăн юр-варне сутакан лавкка Шупашкарта сахал мар. Ăна туянмашкăн хамăр пурăнакан çуртран инçех мар вырнаçнă лавккана çӳретĕп. Вăл ирех уçăлни тата каярах юлса хупăнни маншăн меллĕ. Кунта тăваттăн икĕ ăстрăмпа, эрнесене черетлентерсе, сутă тăваççĕ. Вĕсем тавар туянакансемпе вырăсла калаçаççĕ, хăйсен хушшинче – чăвашла.

Сивĕтнĕ аш тата чăх măйĕ час-часах туяннă май эпĕ те вĕсемпе вырăсла пуплетĕп. Лавккана иртнĕ эрнере кĕрсе тухмалла пулчĕ. Тавар туянакан пулман енне сутуçăсемпе чăвашлах сăмахлама шухăшларăм. «Чăх măйĕ виçĕ чĕркем, сивĕтнĕ пĕр тушка илме кăмăлăм пур», – пĕлтертĕм васкамасăр. Мĕн ыйтнине алăри хутаçа чиксех парса ячĕç. Çакăншăн савăннă пек те пултăм.

Анчах иртерех хĕпĕртенĕ иккен. Алăкран кĕнĕ-кĕменех арăм хутаçа манран илсе тавара сĕтел çине кăлара-кăлара хунă май кăмăлĕ пăсăлнине сисрĕм. Сутуçăсем чăх măйĕ вырăнне пуçне тыттарса янă мĕн. Бройлерĕ те сивĕтни мар, шăнтни кăна. «Чăх пуçĕ туянса укçана мĕншĕн сая ятăн? Ăна çитермешкĕн йытă-кушак тавраш тытмастпăр вĕт. Шăннă чĕппӳне ирĕлтерсен çур тирĕк шыв тухать», – ӳпкелешрĕ măшăрăм. Хирĕç пĕр сăмах та чĕнмерĕм, тавара хутаçа чиксе лавккана танккарăм.

Сутуçăсем ун-кун пăхкаласа илчĕç, мĕн сăлтавпа каялла таврăннине ăнлантарсан: «Чăвашла маннă эпир. Пирĕншĕн пулсан, чăх măйĕ-и е пуçĕ-и – пĕрех, сутса пултăр. Шăнтнă е сивĕтнĕ тенине те ăнкараймастпăр. Кун пек чухне лавккара вырăсла калаçмалла», – терĕç чăваш хĕрĕсем. Чăн та, чăх пуçне те, шăнтнă бройлера та хама кирлĕ пек улăштарса пачĕç, çапла пулса тухнишĕн каçару та ыйтрĕç.

– Ара, пуç вăл – çӳлти, măй – унран аяларахх... – текелесе килелле васкарăм.

■ **Геннадий УТКИН.**
Шупашкар хули

## Питĕркассине пырса кĕрсен…

Каялла тухма пĕлĕр-ши? Манăн тăвансем Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Питĕркасси ялĕнчи Хурамакасси урамĕнче пурăнаççĕ. Мăн акка Мария Григорьевна сакăр вунă çула çывхарать. Ӳсĕмне кура чир-чĕрĕ те тупăнсах тăрать – чĕрепе аптрать, юн пусăмĕ вылять. Анчах та ун патне кĕрхи-çурхи йĕпе-сапаллă çанталăкра «васкавлă пулăшу» машинине чĕнсе илеймĕн, мĕншĕн тесен вăл пурăннă çурт патне техникăпа кăна мар, çуран та пырса кĕме кансĕр: чĕркуççи таран пылчăк çăрăлать.

Сăмах май, ку урамра ачаллă çамрăк măшăрсем те тĕпленнĕ, вĕсене те тухса çӳреме кансĕр.

Питĕркассинчен район центрне çитмешкĕн инçех мар, ял администрацийĕ – тата çывăхрах. Анчах кунта пурăнакансен тертнушине тĕрлĕ шайри ертӳçĕ темшĕн асăрхасшăн мар. Тен, вĕсемшĕн курмăш туса иртни усăллăрах? Кун пек чухне урам хушшинчи çула юсассишĕн пуçа ватмалла мар вĕт.

Республика пуçлăхĕсем ялсен инфратытăмне аталантарассине приоритетлă тĕллевсен шутне кĕртнĕ вăхăтра хуçасăрла хăтланни çапах та Хĕрлĕ Чутайсене чыс тумастех.

■ **Анастасия ОХЛИВАНКИНА.**
Хĕрлĕ Чутай районĕ

## Атте вăрçăран таврăнмарĕ…

Паянхи пенсионерсенчен чылайăшĕ – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланиччен 8-10 çул маларах çуралнисем. Çавна май вĕсем унăн терт-нушине самаях тӳссе ирттернĕ: 1941 çулта вăй питти арçынсем фронта тухса кайнă, вĕсен вырăнне хулара та, ялта та хĕрарăмсемпе ватăсем тата çул çитмен çамрăксем йышăннă.

Вăрçă пуçланнă вăхăтра эпĕ вун пĕрте пулнă, колхоз ĕçне аслисемпе танах хутшăннă. Ачалăх кунĕсене ахăр самана туртса илчĕ, суха касси хушшине тăратрĕ. Ун чухне маттур лашасене те фронта илсе кайнă. Вĕсен вырăнне вăкăр е ĕне кӳлсе ака-суха тăваттăмăр, тырă турттараттăмăр. «Пур те фронт валли, пĕтĕмпех Çĕнтерӳшĕн» – тĕллевпе пурăннă эпир, çав паллă куна çывхартассишĕн кашниех хăйĕн тӳпине хывнă, ир пуçласа сĕм çĕрлеччен колхоз хирĕнче тар тăкнă. «Вăрçă кĕçех чарăнать, аçусемпе пиччӳсем киле таврăнĕç, пурнăç лайăхланĕ. Ун чухне тăраниччен çывăрма, çăкăр çиме пултаратăр», – тетчĕç пире кинемейсем.

Атте вара таврăнмарĕ... 1942 çулхи нарăс уйăхĕнче вăл хыпарсăр çухални çинчен пĕлтерчĕç. Анне пире, тăватă тĕпренчĕкне, çурма тăлăххăн çитĕнтерчĕ. Асли пулнă май кĕçĕннисене ура çине тăратмашкăн ăна самаях пулăшмалла пулчĕ манăн. Вăхăт çитсен хам та măшăрланса çемье çавăртăм, арăмпа иксĕмĕр ача-пăча çуратса ӳстертĕмĕр. Ăрăва халĕ мăнукĕсем малалла тăсаççĕ. Хама телейсĕр теместĕп.

Çапах та Аслă Çĕнтерĕве çывхартмашкăн пирĕн ăрурисем – «вăрçă ачисем» хывнă тӳпене патшалăхăмăр тивĕçлипе хакламанни кăмăлсăрлантарать.

Тăван колхозра ĕçлесе ĕмĕре ирттертĕм, аттесĕр ӳсникипе малалла вĕренеймерĕм. Çакăн çинчен сăмах тапрансан хăшĕ-пĕри, вăрçăран сывă та таса таврăннă ашшĕ хӳттинче çитĕнсе институтра аслă пĕлӳ илни: «Вĕренмелле пулнă, кам сана чăрмантарнă?» – теме пăхать. Çурма тăлăх пурнăçĕ йӳçĕ пулнине ун пекки чухлаймасть çав. Патшалăх пире нимĕнпе те пулăшмарĕ. Вăхăт иртнĕ май çавсен ашшĕсенех, вăрçă ветеранĕ шутланакансене, автомашина, хваттер памалла турĕç, ытти çăмăллăхпа тивĕçтерчĕç.

Эпĕ вара аттен вил тăприне паян кунччenех шыратăп, тĕрлĕ архива çыру яратăп. Ĕмĕрлĕх канăç тупнă вырăнĕ ăçтине кăна пĕлесчĕ, унта çитсе вил тăприйĕ умне чĕркуçленсе пуçăма таясчĕ.

Патшалăхăмăр пирĕн ӳсĕмрисен ĕçри паттăрлăхне тивĕçлипе хакласа вĕсене сума сăвасса эпир /«вăрçă ачисем» ялта çиччĕн юлтăмăр, ыттисем чирлесе-сусăрланса пурнăçран вăхăтсăр уйрăлчĕç/ çапах та шанатпăр...

■ **Валентин ВАСИЛЬЕВ.**
Шупашкар районĕ

*Вулакан сĕнĕвĕ*

## Типĕтнĕ çăкăр усăллăрах

Килте чăх-чĕп çитĕнтерекенсем вĕсене типсе кайнă е лавккара йӳнĕрех хакпа туяннă кондицие ларман çăкăрпа тăрантарни çинчен калаçнине час-часах илтме пулать. Çак ыйту мана та интереслентерчĕ. Çавна май ăсчахсен шухăшĕпе паллашас тесе кĕнеке-журнала самаях шĕкĕлчерĕм, килти хуçалăхра хама май опыт ирттертĕм.

Чăн та, типсе кайнă çăкăр, сухари кайăк-кĕшĕкшĕн усăллăрах. Тин кăна пĕçерсе кăларнине çитерме сĕнмеççĕ, мĕншĕн тесен унашкалли вар-хырăм тăрăх япăх куçать, чăхсен пĕсехинче тулса ларма пултарать. Кайăк-кĕшĕк ĕрчетекенсем типсе кайнă çăкăр çитерме /вĕтетнĕ сухарие шывра е тăпăрчă шывĕнче ислетсе/ сĕнеççĕ.

Хăшĕ лайăхрах: шурри-и е хури-и – çакă вулакана канăççăрлантаратех. Тулă çăнăхĕнчен пĕçерни ыраш çăнăхĕнчен янтăланипе танлаштарсан тутлăхлăрах, унпа ӳт хушаслăх лайăх ӳсет. Хура çăкăра вуçех çитермелле маррине пĕлтермест çакă, ăна та памалла, анчах виçеллĕ – ырашра апат ирĕлессине вăрахлатакан тата ăна хăвалакан крахмал шутланман полисахарид пуррине пăхмасăр, кун пек чухне те тутлăхлă япаласене организм туллин йышăнать.

Кайăк-кĕшĕк рационĕнче çăкăр кăна мар вĕт, ытти çимĕç пур, çуллахи вăхăтра ăна пуянланмалли мел сахал мар. Апла тăк пуринпе те усă курмалла, анчах пĕлсе тата виçеллĕ. Кун пек чухне ӳт хушаслăх та савăнтарĕ, çăмарта та нумайрах пухăнĕ.

■ **Дмитрий ПАВЛОВ.**
Йĕпреç районĕ

**Валентина СМИРНОВА хатĕрленĕ.**

*Реклама*

23 апреля интернет-конференция
Гарант. Информационно-правовое обеспечение
"Подготовка и проведение ЕГЭ 2014"
Задайте вопрос и смотрите онлайн-трансляцию на сайте www.garant121.ru
ООО «Гарант–Чебоксары» тел. (8352) 43-95-25




*Майлă сăмах Майрапи кăмăлне те çавăрать.*

*Тĕпчев*

# Тиркекене – тирĕк тĕпĕ

***Паян республикăри кашни ялта урçа-хусах пайтах. Пĕри авланма иртерех тесе çамрăклăх иртнине сиссе юлайман, тепри – турă çырни пусма вĕçнех килĕ-ха тесе кĕтнĕ, виççĕмĕшĕ – ашшĕ-амăшне тивĕçтерекен хĕр тупайман. Ман шухăшпа, тепĕр пĕлтерĕшлĕ сăлтав та пур. Ялти хăш-пĕр каччă именчĕк, шалти туйăмне уçма вăтанать. Хĕрсем ытларах чухне хăюллисене килĕштереççĕ. Вăрттăнлăх мар, çамрăк хĕрсене хула пурнăçĕ илĕртет. Ашшĕ-амăшĕ те пĕчĕкрен: «Хамăр тертленни те çитĕ, эсир хулара канлĕ пурăнăр», – теççĕ мар-и? Тĕрĕссипе, хăшĕ-пĕри тĕпренчĕкĕсене куçĕсене хупиччченех ăшă çунат айĕнче усрама хатĕр.***

Статистика кăтартăвĕсем тăрăх – Чăваш Енри хĕрарăмсен 62 проценчĕ хулара пурăнать. Çемьеллисен хушшинче уйрăлакан ытларах хулара иккен. Пĕтĕмлетĕвĕн тепĕр енĕ те шухăшлаттарать. Çитĕннĕ арсен 63 проценчĕ çемьеллĕ. Ыттисен шăпи вара уçăмлах мар. Шăпах вĕсен пурнăçĕ кăсăклантарчĕ те. Пĕр пайĕ тĕрĕс çул çинчен пăрăнса сулăнса лекнĕ. Çамрăк чухне хулари ывăлĕсем пурнăçри йывăрлăха чăтаймасăр тăван яла таврăнса ĕçке ярăнни те тĕл пулать. Кун пеккисен ялта та малашлăхĕ çук. Мăшăрĕ те йышăнмасть. Тĕрĕссипе, этем сăнне çухатакан çын никама та кирлĕ мар. Ашшĕ-амăшĕн чĕрине ыраттарса, пенсине туртса илсе кунсерен анкă-минкĕ çӳреççĕ, е...

### Ял шăпи пăшăрхантарнăран

Паянхи ял пурнăçĕпе кăсăкланнă май тахçантанпах шухăшлаттаракан ыйтăвăн тупсăмне уçăмлатас тесе Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тралькасси ял тăрăхне çитрĕм. Елена Лаврентьева пуçлăх хаваспах пулăшма килĕшрĕ. Республикăри чылай районти пекех ку тăрăхра та демографи лару-тăрăвĕ çăмăлах мар. Вилекенсен йышĕ çуралаканнисенчен палăрмаллах пысăк. Иртнĕ çул 8 пепке кун çути курнă, 32 çын вилнĕ. Хальхи вăхăтра ял тăрăхĕн территорийĕнче 7 ял, прописка́ра – 1527 çын. 1273 килтен тĕтĕм тухать. Самаях çулланнă хусах шучĕ – сакăр теçеткене яхăн. Ял хастарĕ Галина Еремеева пĕлтернĕ тăрăх – вĕсен шăпи тĕрлĕрен. Пурнăçри вырăнне тупаймасăр симĕс шĕвек ытамĕнчен хăтăлайманни те çук мар. Аслă ăрурисене çакă самаях пăшăрхантарать. Ял тăрăхĕн администрацине тĕрлĕ ыйтупа пыракан пайтах. Вĕсен шухăшне те пĕлме тăрăшрăм. «Кунĕн-çĕрĕн мухмăрла çӳрекен çын пурнăç иртнине сиссе юлаймасть. Пуçĕнче пĕр шухăш – аншарли е ӳсĕртекен ытти шĕвеке ăçтан тупса ĕçмелле-ши? Ашшĕ-амăшĕн пурлăхне ним шелсĕр аркатаççĕ-çке. Хăшĕ-пĕри авланса та пăхать, анчах мăшăрĕ нумай та пурăнаймасть», – терĕç пăшăрханса. Ялти ватăсене «суя эрех» сутса тупăш тăвакансем те тарăхтараççĕ. Ахальтен мар ĕçкĕçсен хушшинче сарăмсăр е вăхăтсăр вилекен пайтах. Теприсем наркăмăшлă шĕвеке ĕçсе инвалида тухаççĕ. Вĕсен айăпне пулах инкек-синкеке те кĕтсех тăр.

«Хыпар» хаçатăн кăçалхи 38-39 номерĕсенче Николай Егоровăн «Ырă çын пурлăхпа мар, ăс-тăнпа пурăнать» статйи пичетленнĕччĕ. Вăл кашни вулакан чĕринчех тарăн йĕр хăварчĕ пулĕ. Автор Константин Ивановăн вилĕмсĕр «Нарспи» поэминчи тĕп шухăша – «укçапала эрехех çынна ăсран кăларать» – хускатнă.

Çут тĕнчере кашни çын телей курма çуралать. Тепĕр чухне телей уççине хамăр айăпа пулах çухататпăр. Аттеанне пилне те упрама мехел çитерейместпĕр. Этем тивĕçне пурнăçлайманнисен вара чунĕсем чăннипех те чăлах пулĕ. Вĕсем пурнăç илемне те, ăна хаклама та хевте çитереймеççĕ.

Ватă хусахсен хушшинче те йĕркеллĕ пурăнакан çук мар. Тралькасси ял тăрăхĕнче пулнă май эпĕ хăш-пĕринпе курнăçрăм. Тĕлĕнмелли те пайтах пулчĕ. Тепĕр хĕрарăм та типтерлĕхĕпе, хушма хуçалăха аталантарассипе вĕсене çитеймĕ. Ырă тĕслĕх ыттисене те хавхалантарĕ.

### Авланасси – хур тукмакки çиесси мар

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ территорири ик-виç хусаха ĕç пӳлĕмне чĕннĕччĕ. Пуçлăх пӳлĕмне сăпайлă, 40 çултан иртнĕ вăтам пӳллĕ арçын кĕчĕ. Вăл аслă пĕлӳллĕ, шăпах ялта кирлĕ специальноçа алла илнĕ. Миша /ятне улăштартăмăр/ шкулта питĕ лайăх вĕреннĕ, математика, физика тата хими предмечĕсене юратнă. Олимпиадăсенче те пĕрре мар çĕнтернĕ. Аттестат илсен ял хуçалăх институтне кĕнĕ. Кунта та вăл тăрăшсах вĕреннĕ. Чун савнине те тĕл пулнă. Анчах лешĕ именчĕк каччăна урăххипе, вĕçкĕн те харсăррипе ылмаштарнă: ялта



● *Эрхип тĕрĕçĕн ĕçĕсем.*

пурăнма килĕшмен хӳхĕм хĕр хуларине качча тухнă. Чĕре суранĕ тарăн пулнăран яла таврăнсан та Миша хăйĕн вырăнне тупайман. Хĕрсен çывăхне те пыман каччă, пурне те пĕр виçепе виçме тытăннă. Ашшĕ-амăшĕ ывăлне авлантарма темле тăрăшсан та лешĕ хирĕçленĕ. Шелсĕр вăхăт çеç малалла юлан утпа чупнă. Лена пек чиперрине текех тĕл пулайман вăл. Халĕ хуçалăхĕ хăйĕн çинче, ватăсем пурнăçран уйрăлни те чылай ĕнтĕ.

Аппăшĕсем çемйисемпе час-часах килсе çӳреççĕ, шăллĕне пулăшма тăрăшаççĕ. Телее, Миша эрех-сăра ытамне лекмен. Платник ĕçне кăмăлланăран ялти ватăсене хуралтă юсама, ытти ĕçре пулăшать. Кил-çуртне те типтерлĕ тытать, сад-пахчара та ĕçлеме ӳркенмест терĕç ун пирки. Пахчари çĕр лаптăкĕ 40 сотăй. Çулла унта Миша çĕр улми, кишĕр-кăшман, сухан тата ытти çимĕç çитĕнтерет. Хĕл каçма çителĕклĕ хатĕрлет.

Унпа сăмах çăмхи сӳтнĕ май ялта пĕччен хĕрарăм сахал маррине те пĕлтĕм. Çемье çавăрма шухăшĕ пур. Ватлăх çитнĕ кунсенче пĕчченлĕх шиклентерет ăна. Анчах пурнăç çулĕпе пĕрле утма шанчăклă юлташ тупаймасран хăрать. «Авланасси – хур тукмакки çиесси мар», – тесе ахальтен каламан.

### Эрхип тĕрĕçĕ хĕрарăмран та ирттерет

Тралькасси ял тăрăхĕнче тĕлĕнмелле те пултаруллă Эрхип пур терĕç. Ун ĕçĕсене курса савăнтăм. Сăмах май, Анук аппа та çамрăк чухне тĕрĕ ăсти пулнă. «Çапах та ывăл шайне çитеймерĕм», – тет вăл. Эрхип пĕчĕклех ал ĕçне юратнă. Анчах тăрăшса тĕрлеме 9-мĕш класра вĕреннĕ чухне пуçăннă. Кĕске вăхăтра тĕрлессипе пуринчен те ирттернĕ. Паян хăш-пĕр хĕр-упраç тĕрлеме те пĕлмест. Виçĕ теçетке урлă каçнă маттур каччă вара таса пир çине тĕрĕ хыççăн тĕрĕ шăрçалать. Тĕп вырăнта – «Лунтикпа унăн тусĕсем» мультсериалти сăнарсем.

Ăстаçă тĕрленĕ япаласен тӳнтер енĕпе пиччĕнĕ те пĕр пекех. Мĕн чухлĕ вăхăт кирлĕ çавăн пек нумай япала тĕрлеме! Эрхип – ĕçлеме ӳркенмест. Хĕллехи вăхăтра Мускава ĕçлеме каять. Ашшĕ-амăшĕпе пĕрле пурăнать пулин те, юнашар икĕ хутлă кермен çĕклеме пултарнă. Кĕçех унта пурăнма тытăнĕç. Тĕрĕссипе, Эрхип пек çамрăках мар каччăсене ялта хусах теççĕ. Анчах каччă çĕнĕ çурт туса пĕтерсе сĕтел-пукан вырнаçтармасăр авланасшăн мар иккен. Çакна аслисем пĕлтерчĕç. Хăйĕнпе тĕл пулма май килмерĕ.

Эрхип хĕллехи вăрăм каçсене ал ĕçĕпе ирттерет. Хатĕр япаласене амăшĕ чĕнтĕр çыхса илемлетсе парать. Капла тусан материал та сӳтĕлмест тата типтерлĕрех те. Хушма хуçалăхри выльăх-чĕрлĕхе пăхма та, сад-пахчара ĕçлеме те пулăшать вăл. Сăмах май, вĕсем икĕ ĕне, ытти выльăх сахалах мар усраççĕ.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе тепĕр икĕ çемьере пултăмăр. Пĕринче 50 çул урлă каçнă ывăлĕпе сакăр теçеткене çывхаракан амăшĕ пурăнаççĕ. Кил-çуртри тирпей-илем – кунта тăнăçлăх хуçаланнин палли. Урине аппа ывăлне авлантарса мăнуксене курас ĕмĕтпе хавхаланать. Хальлĕхе хулара пурăнакан тепĕр 3 ачин 6 мăнукĕпе йăпанать. Хушма хуçалăхри выльăх-чĕрлĕхе те амăшĕпе ывăлĕ пăхаççĕ.

Тепĕр çемьере ватă ашшĕ-амăшĕпе пĕрле самаях çулланнă ывăлĕсем пурăнаççĕ. Виçĕ пӳлĕмлĕ йывăç çуртра тĕлĕнмелле типтерлĕ те таса, кашни япала хăй вырăнĕнче. Урайĕнче пĕр çӳпĕ кураймăн. Хуçалăхра – сăвакан виçĕ ĕне, пăру-сурăх тата ытти те. Аслă ывăлĕ пилĕк теçетке урлă каçнă, кĕçĕнни çамрăкрах-ха.

Вĕсемпе калаçнă май çамрăк чухне çемье çавăрма ĕлкĕрейменни, вăхăт иртнĕ май юратнă хĕр тупса пурнăç çулĕпе пĕрле утма йывăррине туйрăм. Паянхи ялта качча кайман е пĕччен пурăнакан хĕрарăм тупма та çăмăл мар. Теприсем пĕчченлĕхре лăпкăлăх курать. Хусахсене мăшăрлантарма ĕлĕкхи пек евчĕ те çук-çке.

Çамрăк чухне вун-вун хĕр тупма пултарнă каччăсем, чаплине те илемлине шыранă. Хĕрсене апла та капла суйланă. Тиркекене тирĕк тĕпĕ тенĕ. Тепĕр чухне çамрăксен шăпине ашшĕ-амăшĕ татса парать, ывăлĕ суйланă хĕрсене тиркесе вĕсен ĕмĕчĕсене татаççĕ.

Тралькасси ял тăрăхĕнчи каччăсен шăпи пĕчĕк тĕслĕх кăна-ха. Кун пеккисем кашни ялтах пур. Пĕччен пурнăç яшлăхра та, ватлăхра та çăмăл мар. Анчах вĕсен çемье çаврас шухăшĕ сĕвĕрĕлмен-ха...

■ **Юлия МАРЕЕВА**

*Психолог сĕнĕвĕ*

# Ултав макăртать, чуна ыраттарать...

***Мĕншĕн арçынсем хăйсен арăмĕсене, юратнă хĕрарăмĕсене юттипе улталаççĕ? Савнийĕ урăххи патне пăрахса кайсан этемлĕхĕн черчен çуррийĕ хăй çине алă хурасси пирки те шухăшлать. Ахалех! Малтанах арçын мĕншĕн "сулахаялла чупнин" сăлтавĕсене уçăмлатмалла.***

**Сăлтавĕсем:**

1. Упăшкипе арăмĕ хушшинчи хутшăну начарланнă. Арçын – питĕ хăйне евĕр çын. Уншăн ачаш та туйăмлă мăшăрĕпе мирлешиччен урăххи патне кайма чылай çăмăлрах.

2. Хăйне çылăхсăр пек кăтартма тăрăшать пулин те арăмĕ хăй упăшкине улталать. Ултав пирки те мăшăрне хăйех каласа парать. Паллах, ку арçынна сĕре кӳрентерет. Нумайăшĕ çакна каçармасть.

3. Арçын хăйĕн арăмĕнчен чылай чипертереххине, илĕртӳллĕреххине тĕл пулать. Унпа çывăхланмасăр тӳсеймест. Арçынна кун пеккине тӳсме йывăр. Хитре хĕрарăма курсан вăл "çемçелсех", "ирĕлсех" каять.

4. Савăшу /секс/ ултав мар тесе шухăшлать упăшки. "Ар хутшăнăвне кĕни – ӳт-пӳ канăçлăхне тупни çеç",– тет. Хăйĕн пирки айăпа кĕтĕм тесе шухăшламасть вăл, мĕншĕн тесен çакнашкал хутшăнусенчен киленӳ илет.

5. Упăшкине çĕнĕ кăмăл-туйăм çитмест. Ăна вăл тăрăшсах айккинче шырать. Чылай чухне тупать. Нумай чухне арăмне улталанăшăн кулянать. Анчах çакна вăл хăйĕнче тытать. Арăмне пĕлтерĕччĕ – намăс.

6. Арăмĕ упăшки валли вăхăт сахал уйăрать. Ахăртнех, арăмĕ бизнеспа аппаланать. Çавăнпа унăн çемье валли вăхăт сахал юлать. Вăл ĕçпе кăна пурăнать. Çавăнпа хутшăнура йывăрлăхсем сиксе тухаççĕ.

7. Хĕрарăм Интернетра нумай ларать, упăшкине савăнăçлă самант сахал парнелет. Ирĕксĕрех арçын вăхăта айккинче ирттермелли сăлтав шырать.

8. Арçыннăн кăмăлне ирĕке ярас, канас, киленес килет. Анчах çак киленĕве вăл арăмĕнче шырамасть. Мĕншĕн тесен вăл хăйне вырăн çинче ирĕклĕ тытмасть. Еркĕнсемпе арçынсем хăйсене ирĕклĕрех тытаççĕ. Тепĕр тесен арăм мар, еркĕн пулас текен хĕрарăм та чылай.

9. Арçын хĕрарăм айăпа кĕнĕ тесе шухăшлать. Вăл вăйлă кӳреннĕ те ăнланулăхпа ачашлăха урăх хĕрарăмра шырать.

10. Упăшкине арăмĕсĕр пуçне тепĕр хĕрарăм та кăмăла килет. Вăл вĕсене иккĕшне те пĕр пекех юратни пирки те калама хатĕр. Иккĕшĕнсĕр пурăнаймасть вăл.

11. Арçын аванах ĕçнĕ те... ирхине урăх чиперук ытамĕнче вăраннă. Алкоголь çемьене аркатать. Арçын урăх килте, ют хĕрарăм вырăнĕ çинче вăранасси пирки шухăшламан та. Кун пек чухне хăйне епле туять вăл? "Аван мар-çке! Намăс!" Ĕнерхи каç ăна лайăх пулнă-ши? Çакна та ас тумасть вăл.

12. Арçыннăн малтанхи арăмĕ тата еркĕнĕ пур. Вăл ăна ниепле те манаймасть, çав вăхăтрах арăмне те çухатасшăн мар. Çавăнпа унта та, кунта та ĕлкĕрме тăрăшать.

13. Арçын хĕрарăмсене питĕ юратать. Арăмне улталани уншăн хобби вырăнĕнчех. Вăл унсăрăн пурăнаймасть те. Арăмĕнчен вăрттăн çӳресе вăл хăйне тивĕçлĕ еркĕн тупма ĕмĕтленет.

14. Арçын хăйне хавшак арçын пек туйма пуçланă. Хăй вăйлă, маттур пулнине çирĕплетес тесе вăл юттисемпе çывăхланать. Арăмĕ лайăх хĕрарăм иккенне ăнланать-ха вăл, çапах та урăххи кирлĕ...

15. Арăмĕ тăтăш чирлет, çавăнпа ар хутшăнăвне кĕресшĕн мар. Ирĕксĕрех айккине кайма тивет.

**Енчен те сире упăшкăр урăххипе улталарĕ, чунăр калама çук ыратать, пурăнас та килмест тĕк...**

1. Малалла пурăнмаллах! Хăвăршăн мар пулин те – аçăр-аннĕршĕн, ачусемшĕн. Çынна ырă тăвассишĕн пурăнăр. Ыттисен пурнăçĕнчи çивĕч ыйтусене татса пама пулăшсан, çынна савăнтарсан хăвăра та лайăхрах туйма тытăнатăр.

2. Хăвăра валли вăхăт ытларах уйăрăр. Макияж, педикюр, маникюр тăвăр, çул çӳреве кайăр, культура мероприятийĕсене хутшăнăр, театра, кинона, уяв каçĕсене, дискотекăсене çӳрĕр. Пурнăçра кăмăла уçмалли, шухăша улăштармалли темĕн те пур.

3. Çывăх çынсен, тăвансен хушшинче пулма тăрăшăр. Чуна уçса калаçăр. Анчах ултавçă пирки, вăл сирĕн чуна ыраттарни пирки ан аса илĕр. Ан макăрăр, вăл сирĕн куççуле тивĕçлĕ мар.

4. Упăшкăра каçармастăр тăк – сире уйăрма ыйтса çырма ан манăр. Енчен те иккĕленетĕр тĕк – мăшăрăрпа тепре куçакуçăн калаçăр.

5. Урăх арçынна юратса пăрахăр. Çак утăма тăваймастăр тăк – хăвăра кăмăла килекен арçынпа уçăлса çӳрĕр е ресторана кайса килĕр. Вăл сирĕн начар кăмăлăра сирме пулăшĕ.

6. Ытларах çывăрăр. Начар кăмăла сирме ыйхă лайăх пулăшать. Çывăрса каяймастăр тăк – эмел ĕçĕр. Ыйхă сипленине хăвăрт туйса илетĕр.

7. Иртнине манăр, пурнăça çĕнĕрен, хăвăр ĕмĕтленнĕ пек пуçлăр. Шухăш-ĕмĕт пурнăça кĕрессине ĕненĕр.

8. Пултарулăх валли вăхăт уйăрăр. Вăл нумайăшне, хĕрарăма кăна мар, арçынна та пулăшать.

9. Ытларах ĕçлеме тăрăшăр. Темиçе ĕç пулсан – тата лайăхрах. Паллах, хăвăра упрасси пирки те ан манăр.

■ **Елена АЛЕКСЕЕВА**

*Ăраскал*

# Пирвайхи юрату манăçман



***Пурнăçра лайăххипе усалли черетленессине, шурăпа хура шăрçа евĕр тирĕнсе пырассине шухăшламан та эпĕ.***

Ун чухне эпир вун тăваттăраччĕ. Эпĕ çуллахи каникул вăхăтĕнче кукамай патне яла килнĕччĕ. Эсир, хĕр туссем, колхоза утă тавăрма, çĕр улми пуссине çум курăкĕнчен тасатма çӳреттĕрччĕ. Манăн та кун каçа тунсăхласа ларас килместчĕ. Çапла вара эпĕ те колхоз ĕçне хутшăнма тытăнтăм. Эсĕ ытти хĕр-упраçран уйăларах тăраттăнччĕ. Хăва хулли пек çинçешке пӳ-силлĕ кăна пулин те харсăр ĕçлеттĕнччĕ. Санăн кашни хусканăву илĕртӳллĕччĕ. Кĕçех сана юратса пăрахнине ăнланса илтĕм. Сана курмасăр, санăн çепĕç сассуна илтмесĕр пĕр кун та пурăнас килместчĕ. Каçсерен клуба ташă каçĕсене пĕрле çӳреме пуçларăмăр. Туслă пулнă пулин те сана алăран тытма та, чуп тума та хăяйман. Ытла та хитреччĕ эсĕ. Пур чухне те куçран тинкерсе пăхма та именеттĕм. Шупашкартан сан патна çыру çӳрететтĕм. Кашнине мар пулсан та – хăшне-пĕрне хуравлаттăн. Эпĕ санпа пĕрлешесси пирки те шухăшлаттăм. Анчах санăн аннӳ мана кăра çилĕллĕ, усал хĕрарăм пек туйăнатчĕ. Пытармастăп, килĕшместчĕ вăл мана. Темшĕн вăл сана мана качча памасть пек туйăнатчĕ. "Эх, çав хĕрарăм вилсен эпĕ çĕр çинче чи телейли пулăттăмччĕ",– тесе шухăшлаттăмччĕ вăрттăн. Паллах, çапла эпĕ сан умăнта та, аннӳ умĕнче те çылăха кĕнĕ.

Эсĕ шкул пĕтернĕ çул аннӳ çĕре кĕчĕ. Эсĕ аçупа кăна юлтăн. Манăн çырусене те хурав пама пăрахрăн. "Каччăсемпе çыру çӳретнине атте хирĕç",– терĕн. Çапла, аннӳ пурнăçран уйрăлчĕ пулин те сана качча илеймерĕм, çĕр çинче чи телейли пулаймарăм. Айван пулнă çав эпĕ!

Пирĕн çулсем уйрăлчĕç. Эпĕ шкул хыççăн университет пĕтертĕм, лайăх ĕçе вырнаçрăм. Ачаллă пĕр хĕрарăма качча илтĕм. Юратнă-ши эпĕ ăна? Темле... Сăн-пичĕпе сана аса илтеретчĕ вăл. Эсĕ качча кайнине пĕлсен манăн тек нимĕн кĕтмелли те çуккине ăнланса илтĕм... Кирек ăçта пурăнсан та, кирек ăçта кайсан та эпĕ санăн пурнăçупа яланах кăсăкланнă. Пĕрре, Çимĕкре, çăва çинче ăнсăртран сана тĕл пултăм. Аран палласа илтĕм. Çинçешке хĕртен эсĕ тăпăл-тăпăл кĕлеткеллĕ хĕрарăма çаврăннă. Куçусем ĕлĕкхиллех йăлйăл çиçеççĕ. Упăшку çумра пуррине пăхмасăрах манпа сăмах хушрăн. Мăшăру тем ан шухăшлатăр тесе сан аçу чупса пычĕ те: "Веня пирĕн тăван вăл",– терĕ.

Унтанпа темиçе çул та иртрĕ. Арăм йывăр чире пула çĕре кĕчĕ. Хĕрĕм халĕ 8-мĕш класра вĕренет. Эсĕ те ывăлупа кăна юлнă-мĕн. Упăшку аварие лексе сарăмсăр вилни пирки каларĕç. Тăвансем мана: "Пĕччен ан юл, хĕрӳ кĕçех качча каять",– теççĕ. Ку тĕрĕсех ĕнтĕ. Кайăк-кĕшĕк те çитĕнсен йăвинчен вĕççе тухать... Текех çамрăкланса пымастăп ĕнтĕ. Ватлăхра пĕччен кичем те йывăр пуласси куç кĕрет. Санăн та ывăлу çитĕнсен çемье çаврса уйрăм пурăнма тытăнĕ. Сана та арçын хӳтти кирлех. Эпĕ çаплипех сана юрататăп. Арçын пĕрремĕш юратăва ĕмĕрне те манмасть. Анчах эсĕ савăн-ши, манпа пулма килĕшĕн-ши? Юратмасан та хăть кăштах килĕштерни пултăр. Хăш-пĕри юратмасăрах пĕрле пурăнать. Хăнăхаççĕ те пĕр-пĕринпе чип-чиперех пурăнаççĕ. Унашкаллисем телейлĕрех те.

■ **Веня В.**

Шупашкар хули

*Интереслĕ!*

# Тĕрлĕ тĕс асамĕ

***Хаклă чулсен хăвачĕ, сиплĕх паллисем пирки халăхра чылай сăмах-юмах çӳрет. Хăш-пĕри тĕрлĕ амакран сыхлать, теприсем ăнăçлăха туртса илеççĕ. Кирлĕ талисмана епле суйласа илмелле-ши?***

***Хаклă чулсен тĕллевĕ – пирте мĕн çуккине тупма пулăшасси. Тĕслĕхрен, çемье çавăрас тĕллевлĕ хĕрарăмсен кĕмĕлтен тунă капăрчăксене çакса çӳремелле. Мĕншĕн тесен кĕмĕл – Уйăх чулĕ. Уйăх вара хĕрарăм организмне витĕм кӳрет. Карьеристкăсен вара кĕмĕле мар, ылтăна /Хĕвел чулне/ суйламалла. Ĕмĕт-тĕллевĕре кура хăвăра кирлĕ пулăшуçă хаклă чула суйлăр.***

### Лăпкăлăх кӳрекеннисем

Ялан пăшăрханакансен, кулянакансен Нептун чулĕсене суйламалла.

**Аметист** лăпланма, лайăххине шанма пулăшĕ.

Сăлтавсăрах кăмăл хуçăлать тĕк – **Уйăх чулĕнчен** /лунный камень/ тунă сулă,çĕрĕ тăхăнăр. Хуйхă-суйхăран хӳтĕлет вăл.

### Юрату чулĕсем

Телейлĕ, ăнăçлă юратушăн Уйăх, Нептун тата Венера чулĕсем явапллă.

**Ахах** хăйĕн "хуçине" ачашрах, çепĕçрех, илĕртӳллĕрех, туйăмлăрах пулма пулăшать. Вăл мăшăр хушшинчи хутшăнăва, çемьене çирĕплетет, тăшмана хӳтерет.

**Бирюза** авалтан телей чулĕ шутланать. Бирюзаллă капăрчăксем юратăва тупма пулăшаççĕ, çемьери килĕшӳллĕхпе çурасулăха упраççĕ.

### Вăй-хăват чулĕсем

Хĕвел чулĕсем çынна хăват, çирĕплĕх кӳреççĕ.

**Алмаз** – чаплă талисман. Вăл çынна шанăç, вăй-хал парнелет, ĕçлĕ тĕл пулусен вăхăтĕнче хăюлăх кӳрет.

**Хризолит** тĕрĕс çул-йĕр суйлама, йывăр лару-тăруран тухма пулăшать.

**Авантюрин** кăмăл-туйăма лайăхлатать, шанăça ӳстерет.

### Сывлăх чулĕсем

Вĕсем Венера, Меркурий, Сатурн минералĕсем.

**Агат** ăс-тăна уçма, дисциплинăна çирĕплетме пулăшать.

**Изумруд** çивĕч туйăмлисене хӳтĕлет. Вĕсене вăл начар вăйран упрама пулăшать, тунсăха сирет, канлĕ, лăпкă ыйхă кӳрет.

*Чăн пулни*

# "Сарă çӳçли манăн"

***Тепĕр чухне тĕлĕкре тĕлленни чăна килет. Темиçе çул каялла курнă тĕлĕк пирки каласа парасшăн.***

Манăн Мария ятлă хĕр тусăм пурччĕ. Эпир пĕр çулах качча тухрăмăр. Пирĕн пĕр вăхăталлах çие юлнăччĕ. Ун чухне УЗИ çукчĕ, кам çураласси пысăк вăрттăнлăхраччĕ. Эпир Марийăпа мĕнле ача çуралать-ши тесе ялан юмăç яраттăмăр. "Хырăмĕ çавра тăк – хĕр ача, пуклакрах тăк арçын ача пулать",– тетчĕç пире кинемейсем.

Ача çуратиччен икĕ уйăх маларах тĕлĕк тĕллентĕм. "Эпир Марийăпа çаранпа утатпăр. Илемлĕ! Инçех мар пĕчĕк ача макăрни илтĕнет. Пĕрре те мар, иккĕн пулас. Эпĕ – пĕр еннелле, Мария тепĕр еннелле чупрĕ. Пăхатăп: çĕр çинче чăлт шурă çиттипе чĕркенĕ пепке выртать. Эпĕ чĕркуçленсе лартăм та – вăл тата хытăрах макăрма пуçларĕ. Çĕмĕрт куçлă, вăрăм çӳçлĕ арçын ачаччĕ вăл. Çав самантра Мария чупса пычĕ те мана тĕртсе ячĕ. Эпĕ ӳкрĕм. "Ку – манăн, санăн чĕркемӳ ав леререхре",– тĕллесех кăтартрĕ вăл. Эпĕ тăтăм та тепĕр пепки патнелле утрăм. Хĕр тусăм ăна уçса пăхма ĕлкĕрнĕ иккен. Ку – сап-сарă çӳçлĕ, кăн-кăвак куçлă хĕр пĕрчи-мĕн. Эпĕ ăна алла илтĕм те кăкăр çумне чăмăртарăм, вăл туххăмрах йĕме чарăнчĕ.

Тепĕр кунне тĕлĕке Марийăна каласа патăм. "Çук-çук, эпĕ хĕр ача çуратăп, вăт курăн",– хирĕçлерĕ вăл. Мĕн тетĕр, Мария тепĕр уйăхран арçын ачаллă пулчĕ. Манăн сап-сарă çӳçлĕ хĕр пĕрчи çут тĕнчене килчĕ.

■ **Нина ИВАНОВА.**

Вăрнар районĕ

Страницăна Роза ВЛАСОВА хатĕрленĕ.

*Юбилей*

# Чăваш чунлă Уяр

***/Писатель çуралнăранпа 100 çул çитрĕ/***

Эпĕ хам та çыравçă ятпалах çўрекелетĕп-ха. Хветĕр Уяр вара вăл, пирĕнте танлаштарсан, литературăра пачах урăх çыравçă. Вăл – тăван литературăра уйрăм планета. Унăн сумлă ячĕ чăваш халăхĕн асĕнчен нихăçан та çĕтмĕ, ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ.

Чăваш хутлăхĕнче Уяртан Уяр сăнарĕ тăваканни вăл – «Таната» кĕтрет. Паллах, унăн повеçĕсемпе калавĕсен те ĕнтĕ. «Таната» «Шурча тавраšĕнче» хайлавăн кайрантарах çуралнă ячĕ. Каччă чухнех ĕçлеме пуçланă та Федор Ермилович ку произведенипе мĕн ватăлличченех унăн чăваш чунлă çуртне купалама пăрахман.

«Таната – çыхса тăваççĕ; кайăк тытма кайсан карса хураççĕ, вара кайăк çыхăнса ўкет» – ку эпиграф асăннă хайлавăн тĕп шухăшĕ. Ăна автор Н.И.Ашмарин словарĕнчен илнĕ. Эпир те, республикăри Çамрăксен театрĕн тĕп режиссерĕпе Алексей Григорьевич Васильевпа иксĕмĕр, романа халăх драми хатĕрленĕ чухне çак сăмахсен ăсĕпе хавхалантăмăр. Прологлă, виçĕ пайлă, сакăр картинăлă халăх драми республикăри Çамрăксен театрĕн сцени çинче пайтах пычĕ. Чăваш куракансене пысăк савăнăç кўчĕ вăл. Федор Ермилович Уярпа унăн савнă мăшăрĕ Чăваш халăх артистки Елена Васильевна Шорникова асăннă спектакльпе ăшăнма театра час-час пырса çўретчĕç. Иртнĕ ĕмĕрĕн çитмĕлмĕш çулĕсенче куракан патне çитрĕ спектакль.

Роман тĕп сăнарĕ Ухтиван – социаллă герой. Вăл – ун чухнехи çитнĕ пурнăçа çĕнетсе улăштарма ĕмĕтленекен çамрăк çын. Анчах та вăл чăваш, ĕмĕртен пыракан йăла-йĕркене сума сăвакан этем. Çав йăла-йĕркене Ухтиван ăнкарсах çитереймен вăрттăнĕсем те пур иккен. Сăмахран, çу çитсен тăтăш çумăр çуманран çамрăк Ухтивана нĕрсĕрленме юракан ваттисем ют çĕре çĕр вăрлама кăларса яраççĕ. Ют çĕртен çĕр вăрласа килсен çумăрĕ те наччас лўшкеме пултарать иккен. Вăрласа килнĕ çĕр çав çамрăксен каччă илнĕ арăмĕ шутланать-мĕн. Анчах Ухтиванăн куç хывнă хĕрĕ Савтепи пур. Çĕр вăрласа килнĕ хыççăн унăн текех Савтепипе çўреме юрамасть имĕш. Ирĕксĕрех татăлчĕ Ухтиван ĕмĕчĕ – Савтепи пĕрле пуласси. Ултава ĕç-пуç хыççăн çеç чухласа илет Ухтиван. Килĕштерет Ухтивана хура каччă. Çамрăк каччă – вĕсен ертўçи, вĕсене хўтĕлекенĕ. Ухтиван çĕр вăрласа килни – нĕрсĕрленме юракан хура юнлă ватăсемшĕн питĕ мелле сăлтав: хура халăха хирĕç тăратма усăлакан çăварсене юнпа хупламалла. Çапла вара ял-йышне ыр туни Ухтиваншăн юнлă инкеке çаврăнать. Анчах та тĕппипех пĕтерейменççĕ вăл каччăна, таркăна тухма тивет ун. Вăл малашне хура халăх çăмăллăхĕсемшĕн çĕкленнĕ ертўçĕсемпе пулĕ ĕнтĕ.

Тĕнче çутине курса пурăнма пўрнĕ самантсене ылтăнпа танлаштаратпăр пулсан, Хветĕр Уярпа пĕр-пĕрне ăнланса иртернĕ çутă кунсене те мĕншĕн ылтăн кунсен шутне ылăнас мар?! Ылтарах пĕр-пĕрне халь хаçсан тухнă кĕнекесене парса вулаттарма юрататтăмăр эпир. Калăпăр, В.М.Шукшин хайлавĕсене. Килти библиотекăмăрсене кĕнекесем пуçтарма юрататтăмăр тата. Хамăрăн пичетленсе тухнă кĕнекемĕрсене парнелеме те юрататтăмăр. Хветĕр Уяр хăй аллине çырса панă кĕнеке пайтах манăн. Акă «Таната» романĕ çапăнса тухсан алă пусса пани: «Хветĕрпе ун мăшăрне Вальăна – хисеп те чыс сире! Сирĕн кўршĕр Хветĕр Уяр. 28.1.75. Шупашкар».

Ухтиван пиркиех-ха. Хайлава вуланăçемĕн эпир ун сатурлăхне, пусмăрçăсене хирĕç кĕрешес кăмăлĕ пысăккине витĕр асăрхатпăр. Хура халăха пусмăрласа пурăнакан кантуртисене çилĕ çĕклеме таçта вăйлисем, хăюллисем пуррине те туять-ăнкарать вăл. Халăхра, калăпăр, Пăкачав пăлхавĕнчен сăрхăнса юлнă паттăр çынсем пуррине. Çав çынсен енне туртăнать Ухтиван. Лайăх сиссе тăраççĕ кантуртисем, çавăнпа ăна тĕп тума ăнтăлаççĕ те пурлăхлисем. Ку ĕнтĕ, мĕнле калас, пурнăçăн ĕмĕр кивелмен саккунĕ. Унашкаллисене часрах такăнтарасшăн ытлă-çитлисем, малалла каймалли çулне ултавпа та пулин пўлесшĕн...

Пурнăç вара хăй еккипех малалла. Унăн пĕр саманта та чарăнса тăма май çук. Çўпçапĕ те çителĕклех, ырри те, маттурлăхне сўнтерменни. Ырри вара, мал ўсĕмли, яланах çўп-çапран ытларах. Çапла, пурнăç малашĕ çавăнта...

Произведение хайлав илемĕпе хакламалли шай ĕнтĕ вăл – унăн чĕлхи. «Таната» романра вара унăн тăрă шыв пек шăнкăртатса малалла туртакан асамлă чăваш чĕлхи. Хветĕр Уяр хайлавĕсене вуланă чухне эпĕ хама тăван ял çыннисен хушшине лекнĕ пекех тăнăç туятăп. «Çынни мĕнле – çырни те çапла», – теççĕ те, ăш каничченех йăпанатăп Уяр кĕнекисемпе. Хăйне ирĕксĕрлесе юраттарман илем пур вĕсенче. Вулакана тарăхтарса халтан яман ăшăлăх. Çапла, тепĕр автор хайлавне алла тытатăн та – чĕлхи мăкаран вулама тытăннă-тытăнман тўрех çўп шăтăкне перес килет çав упи-супи лăстăка. Унашкаллисенче чуна çунатланмалăх илем çук.

Пĕр-ик выртăна анчах илсе кăтартам-ха.

«...Тырă пуссинчи çеремлĕ çулпа халăх утать. Пуçсем çинче сăрă тусан йăсăрланать. Тусан пĕлĕчĕ чиркў çўллĕшне çĕкленсе çумăр пĕлĕчĕ пек чăмăртаннă та аякранах хуп-хуран курăнса тăрать. Вăл шумасть, çухалмасть, темле пуç-урасăр пысăк чĕр чун пек, хуллен çеç пĕр вырăнта йăшăлтатса çаврăнкалать. Çынсем çывхарса килеççĕ, иртсе каяççĕ, тусан пĕлĕчĕ çаплах тўпере çакăнса тăрать-ха.

Уйра типĕ вĕри. Хĕрсе çитнĕ сывлăш куçа кĕрет, шăл хушшинче кăчăртатать, кăкăра касать. Çул çинчи шăнăр курăкĕ тахçанах ĕнсе, хăрса ларнă. Анасем çинчи чĕлтĕрти тырра та, çул хĕрринчи армути, хыт хура, пиçен, анра çарăк тунисене те тусан пусса лартнă, ниçта пĕр ешĕл тĕс курăнмасть. Ура айĕнчи çĕр кĕл пек йăштăркка, вĕри». Ку ĕнтĕ çавĕпе çумăр çуманнипе аптăраса çитнĕ çĕре ахлатса выртнине, хăрушă выçлăх çывхарса килнине сăнарлакан ўкерчĕк.

Акă куç тĕлне пулнă тепĕр ўкерчĕк.

«Малта, тĕттĕмĕн курăнакан хăвасен хушшинче, сасартăк темскер шаккани илтĕнсе кайрĕ. Шак! шак! шак! турĕ те сасă – чарăнса ларчĕ. Унтан, чул пăрахнă пек, шыва йывăр япала шампăртатса ўкрĕ.

Ухтиван асăрханса кĕпер çине кĕчĕ. Варрине çитнĕччĕ, кĕпер сасартăк тайăла пуçларĕ. Ухтиван леш хĕррине тухса ўкрĕ – кĕпер шатăртатса çырмана тўнчĕ.

Такам çыран хĕрринчен хăпарчĕ пулас, хыçалта шыва тăпра шăпăртатса тăкăнчĕ, çын сывлани илтĕнчĕ. Вăл ялалла утрĕ... Çав тери çемçен утма пĕлет иккен çын, курăк чăштăртатнипе çеç вăл ăçталла кайнине пĕлме пулать. Ак вăл сассем те йăмрĕç. Шăп.

«Ухтиван! – терĕ çав самантра леш енчен Ивук çурма ыйтуллăн. – Эс чĕрĕ-и? – Кăштах кĕтсе тăчĕ те вăл сехре хăпартмалла кăшкăрса ячĕ. – Ухтива-а-ан!..»

Çĕрлехи шăплăхра каллех ура сассисем илтĕнчĕç. Асăрханса утнинчен – паçăрхи çынах. Хальхинче вăл çул хыттипе килет. Каялла килет.

«Те пурттине пăрахса хăварнă ĕнтĕ, – тесе шухăшларĕ Ухтиван. – Тен, вăл эп ăçта ўкнине ас тунă? Мана вилчĕ темест пуль-çке?»

Çын чăнах та Ухтиван пуçĕ вĕçнех çитсе чарăннă та итлесе тăрать. Пурттине лартсан çакăнта? Ухтиван яшт çĕкленчĕ, ăна уринчен ярса тытрĕ. Лешĕ те тем пуласса кĕтнĕ-мĕн, кутăн кайса ларас вырăнне Ухтиван çине йăванчĕ. Сĕрме купăс шартлатса хуçăлчĕ. Таçтан ун аллине çара ўт лекрĕ. Питне вăрăм çўç пайăркисем хупларĕç. Хĕрарăм, аçа çапасшĕ пуçне! Пилĕкĕ йĕтĕр пек çинçе, Ухтиван алли ун йĕри-тавра иккĕ çаврăнмалла. Хĕрача. Ухтиван пĕрре çех тытрĕ – хĕр çĕре сарăлса выртрĕ, йĕкĕте мăйĕнчен ыталаса илчĕ, тутине шыраса тупрĕ...

«Мĕнле пулчĕ ку?» – ыйтрĕ Ухтиван çĕмрĕк кĕпертен чылай аякка кайсан.

Вăл сылтăм аллипе хĕре пилĕкĕнчен ыталанă, сулахайĕнче – Савтепи пуртти.

Хĕр айăпа лекнĕ çын пек пуçне чикнĕ те нимĕн те чĕнмест. Ухтиван тепĕр хут ыйтнă хыççăн тин вăл кĕскен:

«Пĕлместĕп», – тет.

«Тен, эсĕ ўкĕнетĕн пуль, Савтепи? Тен, эсĕ йăнăшрăн пуль?»

Савтепи пуçне çĕклесе ăшшăн кулса илет, тутрине юсаса çыхать, кĕпине тўрлеткелет.

«Çук, палларăм эпĕ сана... Малтанах Яка Илле мар-и тенĕччĕ. Сан вырăнта урăх çын пулнă пулсан, парăнма мар, эпĕ ăна шыва тĕксе яраттăм».

«Ытла та эс... Арçынна шыва тĕксе яма...»

«Яки Илле пеккине-и?..»

«Вăйлăраххи лекнĕ пулсан? Чип-чиперех пĕтеттĕнччĕ вĕт».

«Куна эсĕ кĕвĕçсе ыйтатни? – тет Савтепи ним кулмасăр. – Хальхинчен ытла пур пĕрех нимĕн те пулмастчĕ».

Халĕ кăна шыва кĕрсе тухнă çын пек, пĕтĕм ўт-пĕвĕпе тĕлĕнмелле çăмăллăх туйса, Ухтиван хĕрĕн чĕри епле тапнине итлесе пырать.

«Ытла та хитре эсĕ, Савтепи, – тет вăл шăппăн, хĕр сăмахне илтмен пекех. – Темĕнле ĕненме май çук пек туйăнать. Юмахри пек, тĕлĕкри пек... Кĕтмен-туман çĕртен... Виçтăвата çул каялла эпĕ сан çине пăхма именеттĕм. Урамра-мĕн тĕл пулсан таçта пытанса ларас килетчĕ».

«Эс халĕ те ытлашши нумая ан хапсăн-ха, йĕкĕт. Эпир нимĕн те калаçман вĕт-ха. Кăнтăр куçĕпе те курман пĕрне-пĕри».

«Пур пĕрех халь ĕнтĕ манăн эсĕ. Эс хитрине те пĕлетĕп эпĕ».

Савтепи кăшт кулнă пек тăвать те нимĕн те шарламасть.

«Тăхта-ха, эпĕ ыйтма манса кайнă. Мĕн тума ватрăн эсĕ вăл кĕпере?»

«Ыран кантуртан хырçă пуçтарма килмелле. Ан каçайччăр терĕм. Аттен пĕр пус укçа та çук».

«Ав мĕнле иккен...»

«Кантуртисем паян та килсе кайрĕç. Санăн а...»

Савтепи пўлĕнчĕ те Ухтиван çине шиклĕн пăхса илчĕ, калас сăмахне каламарĕ.

«Юрĕ, – терĕ Ухтиван пăртак кĕтсе тăнă хыççăн. – Малашне пĕрле пулăпăр. Тухатăн-и ыран вăййа?»

«Пĕлместĕп-ха».

Çапла асамлăх роман тăршшĕпех. Ытти произведенире те çав илем сывлăшех. Вулас та вулас килсе тăрать Хветĕр Уяр чунĕ витĕр тухнă асам сюжетсене.

Эпĕ Хветĕр Уяр пултарулăхне хак парса ятарлă статья çырас тĕллев тытман. Чăваш сăмахне манса пыракан ентешĕмсене Уяр пултарулăхĕн имне тутантарса пăхас тени кăна. Литература пўлминчи пуянлăха та тивĕçлипе хаклама пĕлейместпĕр çав эпир. Ман ĕмĕрте йышлăн тăкăнса пĕтрĕç чăваш литературин классикĕсем. Пирĕнпе пĕрле халь Çемен Элкер те, Петĕр Хусанкай та, Ухсай Яккăвĕ те, Митта Васлейĕ те, Хветĕр Уяр та, Юрий Скворцов та, Илпек Микулайĕ те, тата ытти те çук ĕнтĕ. Чăваш литератури халь хыт хура пусса илнĕ ана пекех мĕскĕнленсе юлчĕ. Чуна ирĕксĕр юраттараймастăн...

Хветĕр Уяр утса тухнă пурнăç çулĕн пылакĕпе йўççине те кăшт-кашт каласа хăварар. Эпĕ вĕсене хам тĕллĕн ăсласа ларам мар. 1968 çулта Чăваш кĕнеке издательствинче «Чăваш писателĕсем» ятпа пичетленсе тухнă кăларăма хатĕрлекенĕ Михаил Юрьев ун пирки çапла çырать: «Хветĕр Уяр /Федор Ермилович Афанасьев/ 1914 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче Куйбышев облаçĕнче, Исаклă районĕнчи Сухари Матак ялĕнче çуралнă. Пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă. Ун хыççăн Самар хулинчи икĕ сыпăклă шкулта вĕреннĕ. Ку шкула ял хуçалăх техникумĕ туса хурсан Хв.Уяр тĕрлĕ çĕрте кăмака купаланă, совхозра выльăх-чĕрлĕх пăхнă, табельщикре ĕçленĕ. 1933 çулта Хабаровскри педагогика техникумне вĕренме кĕнĕ, çав вăхăтрах пуçламăш шкулта учительте ĕçленĕ. 1935 çулта Амур çинчи Благовещенск хулинчи педагогика институтĕнче вĕреннĕ.



1936 çулта Шупашкара куçса килнĕ, «Капкăн» журнал редакцийĕнче литература сотрудникĕнче ĕçлеме тытăннă. 1937-1939 çулсенче Красноармейски районĕнчи Мăн Шетмĕри тата Çĕрпў районĕнчи Йĕкĕрварти вăтам шкулсенче ачасене вырăс чĕлхи вĕрентнĕ. Çав вăхăтрах Шупашкарти педагогика институтĕнче куçăнсăр майпа вĕреннĕ. 1939 çулта Чăваш кĕнеке издательствинче редактора ĕçлеме пуçланă.

1942 çул пуçламăшĕнче Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине кайнă, ăна III степень Мухтав орденĕпе тата икĕ медальпе наградăланă. Сывлăхĕ начар пирки вăл 1943 çулта çартан таврăннă. 1950 çулччен вăл – Чăваш АССР Кĕнеке палатин директорĕ, 1954-1957 çулсенче – «Капкăн» журнал редакцийĕн литература пайĕн заведующийĕ. Ун хыççăн та пĕр вăхăт Чăваш кĕнеке издательствин редакторĕ пулнă.

Хв.Уяр 1958 çултанпа – КПСС членĕ, 1942 çултанпа – СССР Писательсен союзĕн членĕ».

Писатель чĕри 2000 çулта тапма чарăннă.

Çапла, Федор Ермилович КПСС членĕччĕ. Пĕр вăхăтра хура пĕлĕтсем те капланса çитнĕччĕ Уяр пуçĕ тăрне. «Писательпе паллашни» кĕнекере çапăннă «Ăçта эс, тинĕс?» повеçре сыхă критиксем совет çĕр-шывĕн пурнăçне вараласа çырнă вырăн та шыраса тупнă иккен. Федор Ермилович çав хайлавра çут тĕнчере пурăнакан халăх йышĕнче паттăр халăх та, çĕр хурчĕ халăх та пуррине каланă иккен. Кусран калама юратакан этеме тытăнчĕç вара тустарма.

Манăн мăшăрăм Валя мĕн ĕмĕрĕ тăршшĕпех ЧР Писательсен союзĕн библиотекинче ĕçлесе иртерчĕ. Валя каласа панă тăрăх – «Писательпе паллашни» кĕнеке çапăнса тухсан ăна союз библиотеки валли туянсан мăшăрăма пуçлăх хăй патне чĕнтернĕ, кĕнекене касса ваклама хушнă. «Эпĕ ку лайăх кĕнекене касса ваклама пултараймастăп», – тенĕ тет те алăка хупса тухса кайнă. Пуçлăх та ăна урăх чĕнтерсе чăрмантарман.

Çапла, чылай манăн çўлĕк çинче Хветĕр Уяр алă пусса çырса панă кĕнекесем. Иккĕшне кăна илсе кăтартатăп:

«Çул кĕнеки» – Хветĕрпе Вальăна – Хветĕрпе Ленăран. Хисеплесе, юратса. 3.III.78 ç. Шупашкар»;

«Сăмах мехелĕ» – «Хамăр Хветĕре – хисеп те чыс! Хветĕр Уяр 12.VII.80. Кувшинка».

Чăваш чĕлхи нихăçан та ан пăчлантăр, Хветĕр Уяр пек чăваш чунлă чăваш çыравçисем ĕмĕр-ĕмĕр пурăнччăр.

■ **Хветĕр АГИВЕР**

*Конференци*

# Улатăр тăрăхĕнче аваллăх палăкĕ чылай

***Улатăрти тавра пĕлў музейĕнче «Чăваш Енри археологи палăкĕсем. Вĕсене тĕпчени тата упрани» ăслăлăхпа практика конференцийĕ иртнĕ. Унта хула администрацийĕн ĕçченĕсем, тĕн çыннисем, истори предметне вĕрентекенсем, тавра пĕлўçĕсем, студентсемпе шкул ачисем хутшăннă. Ларура Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх сотрудникĕсем хисеплĕ хăнасен йышĕнче пулнă.***

Мероприятие Улатăр хула администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – вĕрентў тата çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕ Владимир Самойлов уçнă. Владимир Николаевич палăртнă тăрăх – археологи теми паян çивĕч тата пуриншĕн те интереслĕ. Уйрăмах – Улатăрсемшĕн. Мĕншĕн тесен Улатăр çĕрĕ çинче архитектура палăкĕсене упрас тата сыхлас енĕпе пысăк ĕç тăваççĕ. Куншăн вырăнти тата республикăн тĕп хулинчи археологсемпе тавра пĕлў музейĕн ĕçченĕсем тав сăмахне тивĕç.

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн наукăн аслă сотрудникĕ Наталья Березина палăртнă тăрăх – Улатăр районĕнчи чи авалхи палăксем – мезолит тапхăрĕнчисем упранаççĕ. Вĕсем 8–9 пин çулта, Сурский Майдан тата Стемас салисен çывăхĕнче вырнаçнă. Кунсăр пуçне Улатăр çĕрĕ çинче тимĕр ĕмĕрĕн пуçламăш тапхăрĕнчи хулашĕ, сăртла купаланă вил тăприсем тата «Завод уçланки» /вун çиччĕмĕш ĕмĕрте кантăк завочĕ пек паллă пулнă/. Шел те, паян унран ишĕлчĕксем кăна юлнă. Çавăн пекех Улатăр енче пытарнă мула чылай тупнă. Авалхи укçапа çурт-йĕрте усă куракан япалана нумай чавса кăларнă. Наталья Степановна пухăннисене «Археологическая карта Чувашской Республики» кĕнекепе те паллаштарнă. Кунашкал кĕнеке республикăра пĕрремĕш хут пичетленсе тухнă. Хальлĕхе унта алфавит йĕркипе Улатăртан пуçласа Красноармейски районĕсем таранччен кăна кĕнĕ. Ытти район тепĕр икĕ томне кĕрĕ. Паян асăннă кĕнекере Улатăр районĕнчи 112 палăк пирки çырса кăтартнă.

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн наука сотрудникĕ Николай Мясников Улатăр тăрăхĕнче пĕлтĕр иртнернĕ экспедици çинчен тĕплĕн каласа панă. Николай Станиславович палăртнă тăрăх – Улатăрсем Раççейри тĕрлĕ хуларан килекен археологсене тăтăш кĕтсе илеççĕ. Наука сотрудникĕн Александр Березинăн докладне те пухăннисем кăсăкланса итленĕ. Александр Юрьевич пĕлтернĕ тăрăх – 1953 çулта Улатăр çывăхĕнче 300 пин çул каялла пурăннă мамонт йăхĕнчи кăнтăр слонĕн шăммине тупнă. Çав тĕллевпе кунта СССР Наукăсен академийĕ ятарлă экспедици те иртнернĕ. Кунсăр пуçне Березовый Майдан, Иваньково-Ленино, Явлей, Стемас, Çĕнĕ Эйпеç, Кувакино, Ичикс ялĕсен çывăхĕнче мамонтăн шăммисене тата асав шăлĕсене чавса кăларнă.

■ **А.ГРОМОВА**

*Тĕрлĕ ăмăртуран*

# Вăйлисем яланах малта

***Çулталăкра çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче вун-вун чемпионат иртет, пысăк турнирсен шучĕ те çук. Вĕсенче чылай спортсмен вăй виçет. Кашни çĕнтерме, медаль çĕнсе илме ĕмĕтленет. Пирĕн ентешсем те ăмăртусене хутшăнма тăрăшаççĕ, нумайăшĕ наградăпа таврăнать. Хăшĕ-пĕринпе паллаштарар-ха.***

**Надежда Федорова.** Тĕнчери тата Европăри чылай ăмăртура палăрнăскер Раççейри ирĕклĕ мелпе кĕрешекенсен командинче чи пултаруллă спортсменсен йышĕнче. Нумаях пулмасть спортăн тĕнче класлă мастерĕ Европа чемпионатĕнче /ака уйăхĕн 1-мĕшĕ, Финлянди, Ванта хули/ виççĕмĕш вырăн йышăннă.

**Лана Прусакова.** Шупашкарти Олимп резервĕсен 2-мĕш спорт шкулĕнче Надежда Сабурова тренер патĕнче вĕренекен фристайлçă Красноярск хулинче иртнĕ спорт шкулĕсен Пĕтĕм Раççейри хĕллехи спартакиадинче çĕнтернĕ. Чăваш Ен чемпионки слоупстайл турнирĕнче судьясене трюксемпе тĕлĕнтернĕ.

**Елена Зайковская.** 13 çулти хĕр ача Тамбовра киокусинкай енĕпе иртнĕ çĕр-шыв ăмăртăвĕнче 50 килограмлă виçере мала тухнă. Çамрăк чемпионка Олимп резервĕсен 5-мĕш спорт шкулĕнче ăсталăха туптать /тренерĕ – А.Нягин/.

**Максим Николаев.** Спорт мастерĕн кандидачĕн нормативне тултарнă каччă – Раççей кубокĕн çĕнтерўçи, çĕр-шыв чемпионачĕн призерĕ. Çак кунсенче боксер тепĕр çитĕнўпе савăнтарчĕ: Мускаври кĕрешў искусствисен центрĕнче ушу-саньда енĕпе иртнĕ Раççей чемпионатĕнче кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ.

**Иван Филиппов.** Пирĕн ентеш Улан-Удэре иртнĕ ирĕклĕ мелпе кĕрешекенсен турнирĕнче 65 килограмлă виçере Буряти Президенчĕн «виççĕмĕш» парнине тивĕçнĕ.

■ **А.ПЕТРОВ**

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерў
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пўлĕмре йышăнаççĕ.

## Саламлатпăр

***Юратнă мăшăра, аттене, кукаçие – Елчĕк районĕнчи Шăмалакри Василий Николаевич КАЗНАЧЕЕВА – çуралнă кунпа чĕрери чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Нихăçан хавшами çирĕп сывлăх, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей, пархатарлă кун-çул, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Эсĕ яланах çакăн пек ырă кăмăллă, маттур, ĕçчен пул. Малашнехи пурнăçунта сăн-питў яланах йăл кулăпа кăна çиçтĕр.***

***Мăшăрĕ, хĕрĕсем, кĕрўшĕсем, мăнукĕ, сывăх тăванĕсем.***

Администрация Бичуринского сельского поселения Мариинско-Посадского района Чувашской Республики информирует сельскохозяйственные организации и крестьянские фермерские хозяйства, обрабатывающие эти участки, о возможности приобретения этих земельных участков, выделенных в счет невостребованных земельных долей с кадастровыми номерами:

21:16:000000:118 площадью 1 191400 кв.м.

21:16:000000:119 площадью 466 900кв.м.,

расположенные по адресу: Чувашская Республика, Мариинско-Посадский район, Бичуринское сельское поселение в собственность при выкупной цене такого участка не выше 15% от кадастровой стоимости или в аренду при арендной плате, не превышающей 0,3% от ее кадастровой стоимости.

Заявки и предложения принимаются по адресу: 429561, Чувашская Республика, Мариинско-Посадский район, село Бичурино, улица Бичурина, д. 2, тел. (83542) 37-2-32.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободных земельных участков, распределяемых на праве аренды до 49 лет из категории "земли сельскохозяйственного назначения" с кадастровыми номерами:

- 21:17:280401:191, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 2557 кв.м.;
- 21:17:120201:177, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 4775 кв.м.;
- 21:17:230701:535, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:230701, для производства сельскохозяйственной продукции, площадью 1469884 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ "МФЦ", с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Организатор торгов - конкурсный управляющий ООО "Снежана" Кузнецов Александр Александрович (СНИЛС 015-145-731-16, ИНН 212900053554), член НП СРО ПАУ ЦФО (адрес: 109316, Россия, Москва, Остаповский проезд, д. 3, стр. 6, оф. 201, 208, ИНН 7705431418, ОГРН 1027700542209), действующий на основании Решения Арбитражного суда Чувашской Республики от 26.01.2012 г. по делу № А79-37/2011, адрес для корреспонденции: 428003, ЧР, г. Чебоксары, ул. Пирогова, д.4а, оф.15, сообщает о проведении на электронной торговой площадке ОАО "Российский аукционный дом" (https://lot-online.ru) (далее - ЭТП) торгов в форме открытого аукциона на повышение стоимости с открытой формой представления предложений о цене по продаже имущества ООО "Снежана" (ИНН 2104004807, ОГРН 1022102029146, адрес: 429220, ЧР, пгт Вурнары, ул. Центральная. 36), признанного Решением Арбитражного суда Чувашской Республики от 26.01.12г. по делу №А79-37/2011 несостоятельным (банкротом)), в составе: Лот №1: Дебиторская задолженность Ефимовой Снежаны Александровны перед ООО "Снежана" (по исполнительным листам: серия АС №005663743 выданному Арбитражным судом Чувашской Республики 08.02.2013г. года и серия АС№006085782 от 18.10.2013г.) всего на сумму 1045254,18 руб. Начальная цена - 44000,00 руб. Заявка на участие в торгах оформляется в форме электронного документа (Приказ Минэкономразвития РФ №54 от 15.02.10 и п.11 ФЗ №127-ФЗ от 26.10.02.). К заявке прилагаются: платежный документ об оплате задатка, действительная на день представления заявки выписка из ЕГРЮЛ, ЕГРИП или заверенная нотариально копия такой выписки (для юрлица, ИП соответственно), копии документов, удостоверяющих личность (для физлица); надлежащим образом заверенный перевод на русский язык документов о госрегистрации юрлица или физлица в качестве ИП по законодательству соответствующего государства (для иностранного лица), копию решения об одобрении крупной сделки, копии документов, подтверждающих полномочия руководителя (для юрлиц). Документы, прилагаемые к заявке, подаются в форме электронных документов, подписанных электронной цифровой подписью заявителя. В торгах могут участвовать юридические и физические лица, в т.ч. ИП, аккредитованные в качестве участников торгов на ЭТП ОАО "Российский аукционный дом", подавшие заявки с необходимыми документами, заключившие договор о задатке и перечислившие задаток в установленный срок. Победителем торгов признается участник, предложивший максимальную цену имущества. Решение об определении победителя торгов принимается в день подведения результатов торгов по месту проведения торгов. В день окончания торгов составляется протокол, и в течение 5 дней с даты его подписания конкурсный управляющий направляет победителю торгов предложение заключить договор купли-продажи. Покупатель производит оплату в течение 30 дней после подписания договора купли-продажи перечислением соответствующей суммы на расчетный счет должника. Реквизиты для перечисления задатка: получатель - ООО "Снежана" р/с 40702810692020000899 в Чебоксарском филиале ОАО "АК БАРС" БАНК, к/с 30101810200000000770, БИК 049706770, наименование платежа: "Задаток для участия в торгах имущества ООО "Снежана" по лоту №1". Ознакомиться с составом лота и его характеристиками можно по месту нахождения имущества после предварительной записи по т/фону (8352)58-45-10 или по адресу: ЧР, г. Чебоксары, ул. Пирогова, 4а-15. Торги назначены на 16.06.2014г. в 11-00 час. Задаток - 20% от начальной цены. Шаг аукциона - 5% от начальной цены. Срок оплаты задатка - до окончания срока приема заявок (с 09-00 час. 28.04.2014 г. до 12-00 час. 09.06.2014г.). Время указано московское.

ЮРМА
ООО «Агрохолдинг «ЮРМА» реализует
ЖИВУЮ ПТИЦУ:
**КУР**-несушек, **молодняк КУР**-несушек,
**ЦЫПЛЯТ-бройлеров, ГУСЯТ**
*Место продажи:*
Чувашская Республика, Чебоксарский р-н, д. Лапсары, ул. Луговая, 31.
Тел.: 8(8352) **50-77-49,** моб. **89176572447.**

## ПРОДАЮ

**4.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка - бесплатно. Т. 89875766562.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, **металлосайдинг.** Доставка. Т. 444433.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг, водостоки.** Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

**75. Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**172.Гравмассу,** керамблок, **песок,** щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

**216.Шпагат сеновязальный.** Дёшево. Тел. 8-927-851-68-58.

**217.Грабли от 24 тыс. руб., плуги, картофелесажалки, окучники, фрезы, косилки.** Низкие цены. Всё новое! Доставка! Тел. 8-937-388-50-89.

**246.Гравмассу, песок,** торф, **щебень,** чернозём. Доставка. Т.89278672710.

**249.БРУСЧАТКУ, плитку** тротуарную, **керамзит, песок** в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 89033220479, 89033580679.

**253.КВАДРОЦИКЛ** новый, бензиновый. – 35000 руб. Т. 89379409511.

## РАБОТА

**100.Требуются монолитчики.** Т. 8-937-952-58-67.

## УСЛУГИ

**250.Кровельные, фасадные** работы. **Монтаж** водостоков. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

## РАЗНОЕ

**257.**Утерянное удостоверение ветерана боевых действий РМ № 0050203, выд. МВД ЧР от 31.08.2004 г. на имя Николаева Л.В., прошу вернуть. Тел. 89278478162.

**259.**Утерянную зачетную книжку № 313496, выд. БОУ ВПО "Московский государств. машиностроительный университет" /МАМИ/ на имя Сергеева А.Н., считать недействительной.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
Золотой фонд прессы MMVIII
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515,
"Хыпар"-шăмат кун" – 78353, "Сывлăх" – 11524,
"Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /явапла секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор Ю.С.МИХАЙЛОВ

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренў пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерўсен пайĕ
56-20-07 – сырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче кăлăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРЎСЕНЕ 316-мĕш пўлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерўсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тўлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшўллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7512. Заказ 1433.